Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 НОЙАБĔР 27 ШАМАТКУН
271 (4783)-мĕш №

Пĕр №-рĕ 10 пус — 19-мĕш çул тухать

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун

Хамăр çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăлар!

Вăрмар районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

ВĂРМАР районĕнчи суйлав умĕнхи канашлува чи лайăх колхозниксем, участкă комиçси членĕсем, довереннăйсем виççĕр çын ытла пухăнчĕç.

Канашлува Вăрмар суйлав округĕн председателĕ М. Т. Григорйев йулташ кĕскен сăмах каласа уçрĕ.

Президиум суйланă хыççăн, Чĕкету йалĕнчи Ворошилов йачĕпе тăракан колховри колхозник Герасимов Петр сăмах илчĕ. Вăл хайсен йал пурнăçĕ тăрăх ĕлĕкхипе халĕхи пурнăçа танлаштарса калать:

— Пирĕн йал пурнăçĕ, ытти йалсенчи пекех, тĕпренех улшăнчĕ. Колхозниксем пуйан та кулĕтурăллă пурнăçпа пурăнаççĕ. Ку пурнăçа Ленин—Сталин партийĕ, Сталин йулташ туса пачĕ,—тет Герасимов йулташ.

Сталин йулташ çинчен асăнсанах залăри çынсем тăвăллăн алă çупма тытăнаççĕ.

Унтан Герасимов хăй довереннăй пулса, халĕхи вахăтра мĕн мĕн туни çинчен калать. Йулашкинчен вăл Г. И. Иванов, В. П. Чкалов тата Е. П. Цыганова йулташсем çинче чарăнса тăрать.

— Буржуаллă националиссем тата вĕсене хӳтĕлекенсем Никитин, Токсин, Кузнецов, Петров т. ыт. те чăваш халăхне нумай сийен кӳчĕç. Иванов—чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕсенчен пĕри, вăл Сталин йулташ йертсе пынипе буржуаллă националиссене тата ытти тăшмансене пĕтерес тĕлĕшпе хайарран кĕрешекенсенчен пĕри. Иванов йаланах халăхшăн ĕçленĕ. Иванов, Чкалов, Цыганова—халăхăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсем, вĕсемшĕн пирĕн сасăламалла,—тесе пĕтерет хăйĕн сăмахне Герасимов.

Канашлу председателĕ Г. И. Иванов йулташа сăмах парать.

— Епĕ 1905 çулта Канаш районĕнчи Тĕмер йалĕнче чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Хăварах куратăрçамрăк. Çамрăклах комсомол ретне кĕрсе ĕçлеме тытăннă. 1925 çултанпа партире тăратăп. Епĕ Ленин—Сталин аслă партийĕн ывăлĕ, мана парти çитĕнтерчĕ. Мана Ленинградри пролетариатпа Ленинградри болĕшевиксем нумай ăс-тăн пачĕç, вĕсенчен епĕ ĕçлеме нумай вĕрентĕм. Ленинградра Сталин йачĕпе тăракан коммунисла Университетра вĕреннĕ вăхăтра мана парти организаци „Большевик", „Электросила" тата „Красный путиловец" заводсенче ĕçлеме хушнă.

Хам çинчен калама лайăх мар пек. Мана шаннишĕн сире епĕ тав тăватăп. Есĕр шаннине епĕ тивĕçлĕ пулăп. Епĕ партине йуратăтăп, кирек хăш вăхăтра та Ленин—Сталин партийĕшĕн хамăн пуçа хума хатĕр. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Малала Иванов йулташ хуçалăхпа кулĕтурă строителстви йенĕпе тăракан задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ.

Декабĕрĕн 12 мĕшне—Аслă Совета суйламали куна пур участкăсенче те пысăк çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илмĕ чĕнсе пĕтерет хăйĕн сăмахне Иванов йулташ.

Кун хыççăн Вăрмар райком секретарĕ—Йандарайев йулташ сăмах калать. Унтан Петрова йулташ („Путь Ленина" колхоз) калать. Унăн сăмахĕ Ленин—Сталин партине, халăхăн çулпуçне Сталина йуратнă кăмăлпа тулнă.

Ун хыççăн „Победа" колхозран Никифоров, Кивĕ Шептахри суйлав участкăри довереннăй—Тимофейев йулташсем тухса каларĕç.

— Суйлав саккунне вĕренменнисем ман участкăра 29 суйлавçă çеç йулчĕ. Вĕсене те вĕренĕве хутшăнтаратпăр. Пирĕн кандидатсене Иванов, Чкалов, Цыганова йулташсене пухусенче пур çĕрте те ырлаççĕ, суйлама сĕнеççĕ. Пирĕн участкăра 8 стена хаçачĕ тухать. Вĕсем пирĕн кандидатсемшĕн агитацилеççĕ,—тет Тимофейев.

Павлов („Красная Кубня" колхоз), Василйев („Красный Шептах" колхоз) йулташсем те вĕсен колхозĕсенче колхозниксем Аслă Совета депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсене Иванов, Чкалов, Цыганова йулташсене ырлани çинчен каласа параççĕ.

Йулашкинчен Вăрмарти спорт инвентарĕсем кăларакан фабрикри рабочи—Николайев тухса каларĕ.

Канашлу постановлени йышăнчĕ. Постановлени ССР Сойузĕн Аслă Советне Иванов, Чкалов, Цыганова йулташсене суйлама чĕнет. Канашлу довереннăйсене çак кандидатсемшĕн агитацилеме хушать.

Хамăр сасăсене Г. И. Иванов йулташа паратпăр

Çĕмĕрле Суйлав Округĕнчи суйлавçăсене Новиков йулташшăн сасăлама чĕнетпĕр

Нойабĕрĕн 22-мĕшĕнче Вăрмар МТС-чи рабочисемпе служăщчисен суйлав умĕнхи пухуvĕ пулса иртрĕ. Пухура Вăрмар Суйлав Округĕ тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националĕнăçсен Советне депутата суйлама регистрациленĕ Г. И. Иванов кандидатури çинчен Вăрмар МТС директорĕн заместителĕ Попов йулташ доклад туса пачĕ.

Г. И. Иванов кандидатури çинчен комбайнер Степанов, токар Софронов, МТС-ĕн аслă агрономĕ Веселов, кладовщчик Павлов тата ыт. йулташсем те тухса каларĕç. Вĕсем Г. И. Иванов йулташ Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлени çинчен калаççĕ.

Кунсăр пуçне, пухура тухса калаçакансем ПСК(б) Парти Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ пулса ĕçлекен И. В. Новиков йулташ кандидатури çинчен те пысăк хавaслăхпа калаçрĕç. И. В. Новиков йулташа ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националĕнăçсен Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма Çĕмĕрле Суйлав Округĕ тăрăх регистрациленĕ. Тухса калаçакансем—Павлов, Веселов тата Софронов йулташсен, Новиков йулташ Вăрмар МТС-ĕн политпайĕн началĕникĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра лайăх ĕçлени çинчен пысăк хаваслăхпа каларĕç.

Пуху резолĕуци йышăнчĕ. Вăл резолĕуцинче çапла каланă:

„Г. И. Иванов йулташ ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националĕнăçсен Советне депутата суйланма Вăрмар суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пани çинчен пĕлсен, епĕр, Вăрмар МТС-чи тракториссем, служăщчисем тата инженерла-техникла работниксем, пысăк хаваслăхпа хамăр сасăсене ПСК(б) Парти Обкомĕн секретарĕшĕн—Г. И. Иванов йулташшăн пама шантаратпăр. Епĕр Вăрмар Суйлав Округĕнчи пĕтĕм суйлавçăсене Г. И. Иванов йулташ кандидатуришĕн сасăлама чĕнетпĕр.

Епĕр, Иван Василйевич Новиков йулташшăн сасăлатпăр. Халĕ вăл ПСК(б) Партин Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ пулса ĕçлет. Ăна ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националĕнăçсен Советне депутата суйлама Çĕмĕрле Суйлав Округĕ тăрăх регистрациленĕ. И. В. Новиков йулташа ПСК(б) Парти ретне кĕнĕ кунранпа, 1924 çултанпа, пĕлетпĕр. Вăл йаланах ответлă ĕçсенче пулнă. Вăл Вăрмар МТС-ĕн политпайĕн началĕникĕ пулса ĕçленĕ чух пире ĕçлеме вĕрентсе тата пулăшса пынипе Вăрмар районĕнчи колхозсене болĕшевиклатас тата ĕçсыннисен пурнăçне пуйанлатас тата кулĕтурлатас тĕлĕшпе нумай çитĕнӳсем турăмăр. И. В. Новиков йулташ çирĕп болĕшевик пулса Ленин—Сталин ĕçне чĕререн пурнăçласа пынине, вăл çынсем çине чĕререн кăмăлпа тата тимлĕн пăхнине лайăх пĕлетпĕр.

Националĕнăçсен Советне суйламали Çĕмĕрле Суйлав Округĕнчи суйлавçăсене Иван Василйевич Новиков йулташшăн сасăлама чĕнетпĕр".

Пуху декабĕрĕн 12-мĕш—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун тĕлне—пур колхозсенче те авăн çапса пĕтерме тата тракторсене йусамалли тăваттăмĕш кварталăн планне тултарма сăмах пачĕ.

Шупашкар суйлав округĕ

Чкалов, Андрейева, Стецкий йулташсен кандидатурисемшĕн сасăлар!

Нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче Шупашкарти кино-театрта хулари ĕççыннисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлуvĕ пулса иртрĕ. Канашлува „Водосвет" рабочийĕ Китайев йулташ уçрĕ.

Канашлура хулари коммунисла организацинчен партин хулари комитечĕн секретарĕ Смирнов йулташ, пуштăпа телеграф работникĕсенчен Лебедев стахановец, аслă лăх работникĕсемпе преподавателсенчен Пединститутри преподавател Шелебов йулташ, килхуçи хĕрарăмĕсенчен Воробйова йулташ, спирт заводĕнчи рабочисенчен Чернова йулташ, Çĕрĕç халăх комиссариатĕнчи специалиссенчен Алексейева агроном, макарон фабрикĕнчи рабочисемпе инженерла-техникла работниксенчен Бадалйан йулташ, хулари çамрăксен организацинчен комсомол хула комитечĕн секретарĕ Асафйев йулташ тухса сăмахсем каларĕç.

Тухса калакансем, РСФСР-чен Горький суйлав округĕ тăрăх Националĕнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă Совет Сойуз Геройĕ полковник В. П. Чкалов йулташăн, Чăваш республикĕнчен Шупашкар суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне суйлама палăртнă З. А. Андрейева йулташăн тата Шупашкар хула суйлав округĕ тăрăх Националĕнăçсен Советне суйлама палăртнă А. И. Стецкий йулташăн пурнăçĕсемпе паттăр кĕрешӳлĕ кунçулĕсене тĕплĕн çутатса парса, пĕтĕм Шупашкар ĕççыннисене Чкалов, Андрейева, Стецкий йулташсен кандидатурисемшĕн сасăлама чĕнчĕç.

Канашлура Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком председателĕ З. А. Андрейева йулташ тухса хĕрӳлĕ сăмах каларĕ.

— Чăваш халăхĕ мана Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн председателне суйласа пысăк шанчăк пачĕ. Шупашкар суйлав округĕнчи ĕççыннисем мана Аслă Совета суйлама кандидата палăртса, тата пысăкрах шанчăк пачĕç. Епĕ хама шанса пăнине тӳрре кăларассишĕн пĕтĕм чĕрене парса ĕçлĕп.

Епĕ, пирĕн пурнăçа тата пуйанрах, тата илемлĕрех, тата телейлĕрех тăвассишĕн тата вирлĕнрех кĕрешме сăмах паратăп!

Епĕ, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйхăватпа кĕрешме сăмах паратăп!

Епĕ, халăхăн хайар тăшманĕсене хирĕç, вĕсене мĕн пур шăтăксенчен мĕн пур тымарĕсемпе тăпăлтарса кăларассишĕн тата вирлĕнрех кĕрешме шантарса сăмах паратăп, тупа тăватăп!—терĕ Андрейева йулташ хăйĕн сăмахĕнче.

Канашлу Шупашкарти пĕтĕм суйлавçăсене Чкалов, Стецкий, Андрейева йулташсен кандидатурисемшĕн сасăлама чĕнсе резолĕуци йышăнчĕ тата Сталин йулташ патне çыру йама йышăнчĕ.

Шупашкар хулинчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи канашлуvĕ йышăннă

РЕЗОЛĔУЦИ

Епĕр, Шупашкарти предприйатисемпе учреждениссенчи, учебнăй заведенисенчи рабочисен, инженерла-техникла работниксен, служăщчисен тата ĕççыннисен суйлав умĕнхи хулари канашлуне пухăннă представителĕсем, А. И. Стецкий, В. П. Чкалов тата З. А. Андрейева йулташсем пирĕн суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ панине пысăк хаваслăхпа кĕтсе илтĕмĕр.

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун—декабĕрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çĕршывăн чаплă ывăлхĕрĕсемшĕн—ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн партилĕ пропагандăпа агитаци пайĕн заведуйушчийĕ, тĕнчери чи демократилĕ конституци тăвакан Сталин йулташăн çывăх помошникĕшĕн, çулăмлă болĕшевик Стецкий йулташшăн, пирĕн çĕршывăн сталинла соколĕшĕн—Чкалов йулташшăн тата ЧАССР Тĕпĕçтăвком председателĕ Андрейева йулташшăн сасăлама тивĕçлĕ пулнине хăйсемпĕн пысăкран та пысăк чыс тесе шутлаççĕ.

Националĕнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă пирĕн кандидат Алексей Иванович Стецкий йулташ пирĕн болĕшевикла парти ĕçĕн ответлă участкине йертсе пыраканĕ пулнишĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн шанчăклă кĕрешекенĕ пулнишĕн епĕр хĕпĕртетпĕр.

РСФСР-тан Горький суйлав округĕ тăрăх Националĕнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă пирĕн кандидат Валерий Павлович Чкалов йулташ—социалисăм çĕршывĕн хăйула соколĕ, сталинла маршрутсене пĕр хăрамасăр чыслăн пурнăçласа, пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерни, пирĕн çĕршывăн, пирĕн авиацин хисепĕпе чапне çĕклени пирĕншĕн пысăк мухтав.

Çавăн пекех епĕр, Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă пирĕн кандидат Зойа Ананйевна Андрейева йулташ ӳссе пырса, государствă управленинче пысăк постсем йышăнма тивĕçлĕ пулса тăнишĕн, халăх тăшманĕсене хирĕç активлăн кĕрешекен пулса тăнишĕн хĕпĕртетпĕр, савăнатпăр.

Суйлав умĕнхи хулари канашлу тĕнчери чи демократиле. Конституцине тăвакан, халăх ĕçĕшĕн, коммунисăм ĕçĕшĕн паттăрăн кĕрешекенсен çарне пăхса çитĕнтерне аслă Сталин йулташа хĕрӳлĕ салам йарать, чĕререн тав тăвать.

Суйлав умĕнхи хулари канашлу Шупашкар хулинчи мĕн пур суйлавçăсене хăйсен сассивене пирĕн тивĕçлĕ кандидатсемшĕн Стецкий, Чкалов тата Андрейева йулташсемшĕн пама чĕнет.

Сывă пултăр никам çĕнтерейми аслă Маркс—Енгелĕс—Ленин—Сталин йалавĕ!

Сывă пултăр болĕшевиксен коммунисла партийĕ!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!

Тбилиси—Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи канашлуvĕ

Грузи ССР-ĕн столицинче Тбилисире—Тбилиси—Сталински суйлав округне кĕрекен заводсен, предприйатисен, чукунçул транспорчĕн, çар чăçĕсен тата шкулсен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлуvĕ пулса иртнĕ. Канашлура 1.600 çын пулнă.

Тухса калакансем пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен йуратнă çулпуçĕ, учителĕ тата тусĕ аслă Сталин çинчен каланă сăмахĕсем хĕрӳлĕ йуратупа йанранă. Халăхсен тĕлейĕпе савăнăçĕн çимвăлĕ, кĕрешӳпе çĕнтерӳсен йалавĕ пулса тăнă йата—Сталин йулташ йатне асăнсан кашни хутах хаваслanса, саламласа кăшкăрни, тăвăллăн алă çупни йанраса тăнă.

Сăмах тухса калакансем пурте, пирĕн аслă тăван çĕршыв халăхĕсен савăнăçлă та телейлĕ пурнăçĕ çине алă хума хăйнă тăшмансен кайашĕсене — троцкисла-бухаринла шпионсене, сăтăрçăсене, диверсантсене тата çынвĕлеренсене ылханса, тарăхса каланă.

Канашлува пухăннисем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама Тбилиси—Сталински суйлав округĕ тăрăх тăратнă кандидата — Грузи болĕшевикĕсен паттăр руководителне Берийа йултаща ăшă кăмăлпа кĕтсе илнĕ.

Канашлури халăх пысăк хавхаланупа Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă.

(ТАСС).

Слабодскăри „Белка" йатлă мех фабрикĕнчи цех началĕникĕн заместителĕ, ПСК(б)П кандидачĕ Г. Ф. Семушина—Сойуз Советне депутата суйланма Слабодски суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăнă (Киров облаçĕ).

Улатăр районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

УЛАТĂР. (Хамăр корреспондентсенчен). Фабрик заводсенчен, колхозсенчен килнĕ представителсем—700 çын, нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче чукунçул çинче ĕçлекенсен клубĕнче Сойуз Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатпа—Спасов йулташпа тата Националĕнăçсен Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидатпа—Моисейева йулташпа тĕл пулчĕç.

Суйлав умĕнхи канашлува паровозсем йусакан заводри партире тăман рабочи-слесăр Корчагин йулташ уçрĕ. Корчагин йулташăн чи малтанхи сăмахĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантаракан, чи демократилĕ Конституци тăвакан Сталин йулташ çинчен пулчĕ. Унăн сăмахне тăвăллăн алă çупса хапăллаççĕ.

Сталин çитĕнтернĕ Чкалов йулташ йатне, парти ĕçĕшĕн активлă кĕрешекен Спасов тата чи лайăх стахановка Моисейева йулташсен йачĕсене илтсен, залăри çынсем „урра" кăшкăрса, тăвăллăн алă çупаççĕ.

Рабочисем, служăщчисем, колхозниксем пĕрин хыççăн тепри туха-туха калаççĕ.

7-мĕш № заводри маçтăр Мохов йулташ Аслă Совета суйламали чи пирвайхи кандидата—Сталин йулташа йуратса саламлани çинчен каласа пачĕ.

— Пĕтĕм çĕршыв Сталин йулташа саламлать. Кирек мĕнле округсенче суйланас пулсан та, пĕтĕм халăх Сталин йулташшăн сасăлать.

Канашлура тухса каланă Утехин, Карабасов, Чапров т. ытти йулташсем те ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама регистрациленĕ Чкалов, Спасов, Моисейева йулташсене саламларĕç.

Трибуна çинче Националĕнăçсен Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат Моисейева йулташ. Унăн хĕрӳлĕ сăмахне тăвăллăн ала çупса хапăллаççĕ.

Моисейева йулташ чи малтан коммуниссен парти, унăн çулпуçĕ Сталин йулташ çинчен калать. Суйлавçăсем унăн кандидатурине тăратнăшăн вăл пĕтĕм чĕререн тав тăвать, çĕршывшăн хăйĕн мĕн пур вăй-халне хума сăмах парать.

Унтан Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Спасов йулташ çапла каларĕ:

— Манăн кандидатурăна тăратнă пур рабочисене, пур работницăсене, пур колхозниксемпе колхозницăсене, инженерла-техникла работниксене тата служăщчисене мана шаннăшăн мĕн пур кăмăлтан, чĕререн тав тăватăп. Хамăрăн тăван çĕршыв тĕреклĕхне çирĕплетессишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешме сăмах паратăп.

Канашлу пĕр сасăпах Сталин йулташ патне çыру йачĕ. Вăл çырура çапла каланă: „Епĕр сана, Сталин йулташ, ССР Сойузĕн Аслă Советне чи лайăх çынсене, Ленин—Сталин партине, совет халăхне йуратакан, шанчăклă çынсене суйлама сăмах паратпăр. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали куна епĕр производствăра çĕнĕрен ӳсĕм тунипе, стахановла йухăма тата социалисăмла ăмăртăва малалла аталантарса пынипе кĕтсе илетпĕр".

Канашлу суйлав умĕнхи пухусенче палăртнă кандидатсемшĕн—Чкалов, Спасов тата Моисейева йулташсемшĕн сасăлама чĕнсе Улатăр районĕнчи пур суйлавçăсем патне те чĕнӳ йачĕ.

* * *

Çав кунах, каçхине 4 сехетре, Улатăр хулинче 20 пин çынлă митинг пулса иртрĕ. Ку митингра ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кандидатсем Спасовпа Моисейева йулташсем пулчĕç.

Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйесĕ уçăлни çулталăк тултарни

Сталин йулташ ССР Сойузĕн Конституци пройекчĕ çинчен тунă доклачĕн тонфилĕмне трансĕлацилени

Нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче каçхине, Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сйесĕ уçăлни çулталăк тултарнă кун, вăл Сйесра Сталин йулташ ССР Сойузĕн Конституци пройекчĕ çинчен тунă доклада пĕр çул кайала тонфилĕм çине сырнине, йуратнă çулпуçĕн сассине пирĕн çĕршыври ĕççыннисем тепĕр хут итлерĕç.

Хĕрлĕ кĕтессенче, клубсенче, колхозсенче, общежитисенче, инçетри чикĕсенчи чикĕ отрйачĕсенче, тайгара тата сăрт-тусенче вуншар пин çын радио тăрăх Сталин йулташăн историлĕ сăмахне хумханулă итленĕ.

(ТАСС).

СУЙЛАВ УМĔНХИ КАНАШЛУСЕМ

Суйлавçăсем хăйсен кандидачĕсене саламлаççĕ

Çĕмĕрле суйлав округĕ

ÇĔМĔРЛЕ, нойабĕрĕн 25-мĕш (хамăр корреспондентран телефон тăрăх). Пайан районти ĕççыннисен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлăва 400 çын ытла пухăннă. Канашлăва комбинатра ĕçлекен партире тăман рабочи Федоров йулташ уçрĕ. Вăл хăйĕн малтанхи сăмахĕнче совет çĕршывĕ 20 çул хушшинче Ленин—Сталин парти йертсе пынипе тунă пысăк çитĕнӳсем çинчен калат. Унăн: „Епĕ хамăн сасăма Аслă Совет депутатне суйлама чи лайăх большевиксемшĕн—Совет Сойуз Геройĕ полковник Чкалов йулташшăн, орденоносец Краснов йулташшăн тата Новиков йулташшăн паратăп“ тенĕ сăмахне залри пĕтĕм халăх аллă çупнипе кĕтсе илет.

Трибунă çине пĕрин хыççăн тепри тухса хамăр суйлав округĕ тăрăх Аслă Совета суйлама регистрациленĕ кандидатсемшĕн сасăсене пама пулни çинчен калаççĕ.

Канашлу Национальнăççен Советне депутата суйлама палăртнă Новиков йулташпа Сойуз Советне депутата суйлама палăртнă Краснов йулташсем калапине хыттăн аллă çупса илет.

Канашлу хыççăн Хĕрлĕ плошчĕдре Çĕмĕрле ĕçхалăхĕн митингĕ пулса иртрĕ. Митингра Красновпа Новиков йулташсем тата Федоров, Спиридонов йулташсем тухса саламлă сăмахсем калаçĕç.

6000 çынлă митинг пĕр сасăпах Аслă Совета депутата суйлама палăртнă кандидатсене ырласа резольуци йышăнчĕ.

* * *

Сталин йулташ патне йакă çыру

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Пĕтĕм халăхсен учителне, чăн çывăх тусне, сире, йулташ Сталин, епĕр, Çĕмĕрле районĕнчи суйлав умĕнхи канашлура пулнисем, хамăрăн пирвайхи сăмахна хĕрӳлĕ пролетарилĕ салам йаратпăр.

Хаклă Иосиф Виссарионович! Епĕр ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртнă сирĕн кандидатурăна Сталински суйлав округĕ тăрăх регистрациленĕшĕн савăнатпăр, мухтанатпăр. Сирĕн аслă, чаплă пату, Сталин йулташ, хамăр çĕршыври пĕтĕм ĕççыннисемшĕн, уйрăмăнах пирĕн чăваш халăхĕшĕн, коммунисăм çĕнтерĕвĕшĕн, халăхăн пур ташманĕсене тĕпникпех пĕтерессишĕн пĕтĕм ĕççыннисене капиталисăмла пусмăртан тата фашисла тискерлĕхрен ирĕке кăларассишĕн кĕрешмелли йалав пулса тăрат.

1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕнче епĕр суйлав урни патне пырса, есĕр йертсе пынипе тата есĕр пăхса ӳстернĕ социалисăмла тăван çĕршывăн ывăлĕсемпе хĕрĕсемшĕн хамăрăн сасăмăрсене паратпăр. Çавăнпа пĕрлех епĕр суйлав кун хамăрăн производствăла çитĕнӳсем çинчен рапартлатпăр. Епĕр кашни предприйатире, колхозра, учреждениссенче çирĕп йĕрке тума, ăмăртун социалисăмла çĕнĕ çĕкленĕвне хутшăнма, большевикла сисĕмлĕхе татах та вăйлатма пулатпăр.

Есĕр, Сталин йулташ, çирĕп йертсе пынипе пирĕн çĕршыври социалисăм çĕнтерĕвĕсем аслă та пысăк.

Пирĕн çĕршыври телейлĕ те ирĕклĕ пурнăç—вăл çĕнĕ Конституцире палăрат. Ăна пирĕн ĕçхалăхĕ Сталинла Конституци тесе калат.

Епĕр малашне те хамăрăн Ленин—Сталин партийĕ тавра çирĕппĕн пĕтĕççе, пролетари колоннин пуçĕнче сирĕн пек, Иосиф Виссарионович, пролетарипе револьуцин гениальнăй стратегĕ пулнипе, малала коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем патне çирĕппĕн кайма шантаратпăр.

Сывă пултăр пирĕн ирĕке тухнă хăватлă халăх!

Сывă пултăр пирĕн мухтавлă, пурне те çĕнтерсе пыракан Ленин — Сталин партийĕ!

Сывă пултăр социалисăм çĕнтерĕвĕсен паттăр организаторĕ—пирĕн тăван Сталин!

Новиков йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! Мана Çĕмĕрле суйлав округĕнчи ĕççыннисем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Çавăншăн епĕ хамăрăн округри ĕççыннисене пĕтĕм кăмălпа тав туса ман çине хунă пысăк та мухтавлă шанчăка пурнăçлама мĕн пур вăйа хурса ĕçлеме шантаратăп.

Епĕ хамрăн хам ыйтрăм: мĕншĕн-ха ĕçхалăхĕ мана шанса Аслă Совет депутатне суйлама кандидата палăртрĕ? Ăна епĕ çапла ответлеме пултаратăп: Епĕ ĕлĕк, шывçул транспортĕнче ĕçлекен çынтан парти работникĕ пултăм.

Халĕ епĕр савăнăçлă та телейлĕ пурнатпăр. Пурте епĕр Ленин—Сталин ĕçне тăватпăр. Епĕ хам çак пурнăçшăн пĕтĕм вăйа, кирлĕ пулсан—хам пурнăçа чăма хатĕр. Мĕншĕн тесен, епĕ хам ĕççынни ывăлĕ тата пĕрриччен те ытла епĕ коммунисла партин ывăлĕ пулса тăратăп.

Пирĕн парти чăн-чăн çирĕп хурçă пек парти. Вăл массăна организацилесе йертсе пынипе епĕр Октаберте влаçа хамăр алла илтĕмĕр. Парти йертсе пынипе граждан вăрçинче ташмансене çĕнтертĕмĕр. Унăн хыççăн пирĕн хуçалăха çирĕп ура çине тăратмала пулчĕ. Ăна та парти çирĕп пурнăçларĕ. Коммунисен парти йертсе пынипе коммунисăм обшчестви патне пыратпăр. Хамăр хуçалăха çирĕплетнипе пĕрлех епĕр хамăрăн оборонăна тĕреклетрĕмĕр, никам çĕнтерейми çĕршыв турăмăр.

Пирĕн çĕршывăн никам çĕнтерейми Хĕрлĕ çар пур. Хĕрлĕ çар пирĕн ĕççыннисен ывăлсенчен тăрат. Ăна çирĕп большевик—Сталин йулташăн çывăх тусĕ—К. Ворошилов йертсе пырат.

Епĕ сире тата тепĕр хут шантаратăп: хамăр округри ĕççыннисем мана шанса Аслă Совета депутата суйлама кандидата тăратнăшăн хавхаланса, малашне пĕтĕм вăйа телейлĕ пурнăç тăвас ĕçе хуратăп.

Сывă пултăр социалисăм çĕнтерĕвĕсен организатăрĕ, коммунисăм патне илсе пыракан, çывăхран та çывăх пирĕн хаклă Сталин!

* * *

Çĕмĕрле районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу йышăннă

РЕЗОЛЬУЦИ

Çĕмĕрле районĕнчи ĕççыннисен суйлав умĕнхи канашлăвĕ РСФСР-чен Горький суйлав округĕ тăрăх Национальнăççен Советне депутата суйлама регистрациленĕ Совет Сойуз Геройĕ полковник В. П. Чкалов кандидатурине, Çĕмĕрле суйлав округĕ № 367 тăрăх Сойуз Советне депутата суйлама регистрациленĕ А. М. Краснов кандидатурине тата Çĕмĕрле суйлав округĕ № 505 тăрăх Национальнăççен Советне депутата суйлама регистрациленĕ И. В. Новиков кандидатурине сӳтсе-йавнă хыççăн, социалисăмла тăван çĕршывăн чаплă çыннисене, большевиксен парти ĕçĕпĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлекенсен, коммунисăмшăн ырми-канми ĕçлекенсен кандидатурисене пысăк хавaслăхпа тата тулли кăмăлпа пĕр сасăпах йышăнчĕ.

Епĕр, канашлура пулнисем, пурте хамăрăн сасăсене çак чăн-чăн тивĕçлĕ Чкалов, Новиков, Краснов кандидатсемшĕн пама хатĕрри çинчен пĕлтеретпĕр.

Çĕмĕрле районĕнчи ĕççыннисен канашлăвĕ канашлура пулнисене пурне те Чкалов, Новиков, Краснов кандидатсемшĕн суйлавçăсем хушшинче, доверennăйсемпе пĕрле ырми-канми агитацилеме чĕнет.

Канашлу Çĕмĕрле районĕнчи суйлавçăсене пурне те хăйсен сассине чаплă Сталинла соколшăн—Совет Сойуз Геройĕ Чкаловшăн, Новиковшăн тата орденоносец Красновшăн пама чĕнет.

Сывă пултăр мухтавлă коммунисла парти—пирĕн çĕршыври çĕнтерӳсен организаторĕ!

Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!

Çĕмĕрле районĕнчи суйлавçăсене чĕнсе калани

Хаклă йулташсем! Декабĕрĕн 12-мĕшĕ—пĕтĕм халăхăн аслă уйавĕ! Çак кун Совет çĕршывĕнчи халăх Сталинла Конституци тăрăх рабочисемпе хресченсен социалисăмла патшалăхĕн аслă органне—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлат.

Совет Сойузĕнчи халăхсем халĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне тăван çĕршывăн чаплăран та чаплă, тивĕçлĕрен те тивĕçлĕ ывăл-хĕрĕсене суйлас шухăшпа пурăнаççĕ.

Йулташсем! Нумай пинлĕ рабочисемпе хресченсен пухувĕсенче ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата РСФСР-чен Горький суйлав округ № 15 тăрăх Национальнăççен Советне Çĕмĕрле суйлав округ № 367 тăрăх Сойуз Советне тата Çĕмĕрле суйлав округ № 505 тăрăх Национальнăççен Советне суйлама палăртнă кандидатсем çӳлте асăннă округсем тăрăх баллотировкăна тăма килĕшӳ пачĕç. Халĕ вĕсене регистрациленĕ. Вĕсем çаксем:

1) Совет Сойуз Геройĕ полковник В. П. Чкалов кандидатурине РСФСР-чен Горький суйлав округĕ тăрăх Национальнăççен Советне суйлама регистрациленĕ;

2) Йетĕрне районĕнчи „Крестьянская газета“ колхоз председателĕ — орденоносец Краснов кандидатурине Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх Сойуз Советне суйлама регистрациленĕ.

3) Парти РК секретарĕ И. В. Новиков кандидатурине Çĕмĕрле суйлав округĕ тăрăх Национальнăççен Советне суйлама регистрациленĕ.

Епĕр, Çĕмĕрле районĕнчи ĕççыннисен суйлав умĕнхи канашлăвне пухăннă заводсен, колхозсен, коммунисла организацисен, профсойузсен, комсомол тата ытти обшчествăлă организацисен представителĕсем доверennăйсемпе пĕрле округри суйлав комиççисем Совет Сойуз Геройне полковник В. П. Чкалов, орденоносец Краснов тата Новиков йулташсен кандидатурисене регистрациленĕ постановленисене хастарлăхпа хапăл туса, çак кандидатурăсемшĕн хамăрăн сасăсене пама йышăнтăмăр.

Çĕмĕрле районĕнчи суйлавçăсене пурне те пирĕн тăван çĕршывăн çак чаплă ывăлĕсемшĕн хăйсен сассине пама чĕнетпĕр.

Сывă пултăр никам çĕнтерейми Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин аслă йалавĕ!

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Мускаври Сталински суйлав округĕнче

АГИТПУНКТ

Аслă та çутă пӳлĕм. Плакатсемпе тата лозунгсемпе илемлетнĕ стенасем тăрăх шчитсем тăратса тухнă. Вĕсем çине нумай фо-о-ӳкерчĕксемпе портретсене, документсен ӳкерчĕкĕсене, илемлетсе çырнисемпе диаграммăсене илемлĕн вырнаçтарнă.

Ку пысăках мар, анчах пит паха выставкăна ĕççыннисен аслă çулпуçĕ, совет халăхĕшĕн чи çывăх та чи хаклă çын, ССР Сойузĕн çĕнĕ Конституцине тăвакан—Сталин йулташ йачĕпе тунă. Ӳкерчĕксем, документсем, диаграммăсем Сталин йулташăн пурнăç çулĕ çинчен, вăл ăсларан та ăсла йертсе пынипе тунă социалисăм çĕнтерĕвĕ çинчен каласа параççĕ.

Столицăри (Сталински суйлав округĕнчи) 87-мĕш суйлав участкинчи çĕршер суйлавçăсем кашни кунах кунта—агитпункт пӳлĕмне пыраççĕ. Кунта суйлав комиççи членĕсем, пропагандиссем тата агитаторсем пĕрмайах дежурнăйра тăраççĕ. Каççерен—суйлавçăсен пухувĕсем, квалификацилĕ пропагандиссен лекцийĕсемпе калаçувĕсем пулса иртеççĕ.

Большевикла агитацин формисемпе меслечĕсем 87-мĕш суйлав участкинче пит тĕрлĕрен. Вĕсем çинчен агитпункт ĕçĕн дневникĕнче кĕскен çырса пынисем каласа параççĕ:

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче. Çурт управлени уполномоченнăйĕсен канашлăвĕ пулнă. Уполномоченнăйсемпе агитаторсем кашни килте тунă ĕçсем çинчен кĕске отчотсем итленĕ. Суйлав умĕнхи митинга хатĕрленмелли план палăртса хунă. Пухăнмалли вырăна, колоннăсене йĕркелессине, клубра тата килсенче ача пӳлĕмĕсем организацилессине т. ыт. те палăртса хунă.

Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче. Агитпункт пĕр клубра организациленĕ митингра 600 ытла çын пулнă. Доверennăйсем суйлавçăсене округри суйлав умĕнхи канашлу йышăннă решенисем çинчен каласа панă.

Нойабĕрĕн 19-мĕшĕнче 400 ытла суйлавçа „пĕтĕм тĕнчери ларутăру“ çинчен доклад итленĕ.

Нойабĕрĕн 20 мĕшĕнче. Суйлав саккунне вĕренмелли кружоксене тĕрĕслесе тухнă.

Нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче. Суйлавçăсен вечĕрĕнче „чиркӳ çыннисемпе сектантсем—контрреволюци тĕрекĕ“ йатлă доклад туса панă. Суйлавçăсен хватерĕсенче „Дочь партизана“ кино-картинă кăтартнă.

Нойабĕрĕн 22-мĕшĕнче. Пĕр клубра килхуçи хĕрарăмсене суйлавçăсене вальли концерт панă.

Агитпунктăн агитациле-пропагандăла ĕçĕн планĕнче екскурçисем, суйлавçăсене столицăра ĕлĕкхи вăхăтра пулнă револьуциле ĕçсемпе большевикла партин револьуцичченхи тата граждан вăрçи çулĕсенчи ĕçĕсемпе паллаштаракан музейсене, выставкăсене илсе кайса кăтартасси пысăк вырăн йышăнса тăрат.

Нумай пулмаст агитпункт хăйĕн участкинчи чи ватă çынсене пухнă. Вĕсем автомобилсемпе Мускав тăрăх, çĕнĕ урамсем, стройкăсем тăрăх курса çӳренĕ. Çак интереслă екскурçинче пулнă çынсен куçĕ умне столицăна социалисăмла улăштарассин тĕлĕнмеле картинĕ тухса тăна. Вĕсем, большевиксен йайхавачĕпе, кивĕ Мускавăн сăнсăпачĕ мĕнле улшăннине курнă. Ĕмĕрхи лаççем пулнă вырăнта чаплă çуртсем çитĕнеççĕ, малтанхи кукăр-макăр тата тĕттĕм тăкăрлăксем социалисăмла хулан илемлĕ, сарлака тата тӳрĕ урамĕсем пулса тăраççĕ.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче 87-мĕш суйлав участкинчи суйлавçăсем пурте пĕр çын пек пулса суйлав урнисем патне пыраççĕ, хăйсен сасăсене Сойуз Советне депутата суйламалли пĕррремĕш кандидата—Иосиф Виссарионович Сталина тата Национальнăççен Советне депутата суйлама Мускав хула суйлав округĕнче тăратнă кандидата—тӳрĕ большевика—Булганин йулташа параççĕ.

(ТАСС).

Борисов хулинчи Киров йачĕпе тăракан шăрпăк заводĕнчи цех мастăрĕ стахановка Йекатерина Сергейевна Журанкова—Национальнăççен Советне депутата суйланма Борисоври хула суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăнă (Белорус ССРеспублики). (Сойузфото).

Стена хаçачĕн ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлемелли ĕç планĕ*)

Колхозри стена хаçачĕ хăйĕн суйлав участкинчи халăха ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрлес ĕçе лайăх туса пытар тесен, унăн тĕплен шухăшласа тунă план пулмала. План хут çинче анчах ан пултăр, вăл ĕçе кĕтер тесен, çавăн пекех редколлегине ялкорсĕн, стена хаçат активĕн вăйĕсене тĕрĕс тăратса тухмала.

Стена хаçат редколлегийĕсене çавăн пек план тума пулăшас шутпа, епĕр Йежов йачĕпе тăракан колхозри „Путь к социализму“ стена хаçат редколлегийĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрлес тĕлĕшпе тунă план çинчен каласа паратпăр.

Анчах та кунта çак плана октябĕрĕн малтанхи çур уйăхĕнче тунине шута илмелле, [illegible] суйлава хатĕрленессине пысăк ĕçсем пулса иртрĕç. ССР Сойузĕн Аслă Советне Сойуз Советне тата Национальнăççен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсене анлăн сӳтсе-йаваççĕ. Суйлав умĕнхи канашлусем пысăк хавалпа иртеççĕ. Паллах ентĕ, октябĕрĕн пуçламăшĕнче тунă плана çав ĕçсене пăхма пултараймăн. Епĕр „Путь к социализму“ стена хаçат планĕ çинчен—ытти стена хаçачĕсем халăх опычĕ илччĕр тесе каласа паратпăр. Çак план çине кашни стена хаçачĕ вальли хатĕр рецепт çине пăхнă пек пăхма йурамаст. Пурнăç халех çав плана чылай улăштарат.

„Путь к социализму“ стена хаçат редколлегийĕн планĕ уйрăм сыпăкĕсене илсе паратпăр. Епĕр кунта планра лартнă ыйтусене çеç çутататпăр.

Октябĕрĕн 15-мĕшĕнчи номĕр. Умстатйа. ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Аслă Совета суйламалли кун çинчен йышăннă постановленине анлăн тĕтса парат (редактăр Н. Сухоруков çырат). Конституципе суйлав саккунне вĕренекен кружоксен ĕçĕсем çинчен калакан материалсем (Д. Мосол организацилет).

„Крестьянская Газета“ заочниксем валли каларакан „Подготовка к выборам в Верховный Совет СССР“ лекцирен [illegible]

Октябĕрĕн 18-мĕшĕнчи номĕр. Йалти суйлав комиççи çинчен. Участкăна мĕнле организациленĕ, унта мĕнле колхозсем кĕни çинчен каласа памала. Трудолюбовск йал суйлав участкине кĕрекен Запорожри суйлав округне мĕнле организациленĕ çинчен статйа. Округри тата участкăри суйлав комиççи членĕсене характеристикă парас. Материалсене Н. Сухоруковпа Д. Мосол йулташсем организацилеççĕ.

Октябĕрĕн 20-мĕшĕнчи номĕр. Йалти суйлав участки çинчен малала каласа пани. Халăх тата суйлавçăсен хисепĕ, халăх шучĕ нумайланни, Совет влаçĕ пулни 20 çул хушшинче вилекенсен шучĕ чакни, халĕ суйлавçăсем мĕнлине (арçынсем, хĕрарăмсем, стариксем, çамрăксем) кăтартас. Суйлавçăсен профессине кăтартас. Револьуциччен йалта кам йатлă çын пулнине (йуп, кулак, усламçă), халĕ кам пулнине (орденоносецсем, стахановецсем, ударниксем, комбайнерсем) кăтартакан аçа-илӳсене пичетлес. Умстатйа çак 20 çул хушшинче йалта советăн çĕнĕ çыннисем, партипе совет влаçĕ ĕçĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекенсем ӳсни çинчен. Умстатйана йалсовет председателĕ Йешченко йулташ çырат.

Октябĕрĕн 22-мĕшĕнчи номĕр. Обшчествăла организацисен (комсомол, йалсовет, кооперaци, вĕсен активĕ) суйлав участкинчи ĕçĕсене кăтартас. Вĕсем колхозниксене обшчествăла-политикăла пурнăçа мĕнле хутшăнтараççĕ. Йалти ирĕклĕ обшчествăсен (Осоавиахим, МОПР) ĕçĕсене кăтартас. Умстатйа суйлав участкинчи обшчествăла-политикăла ĕç çинчен.

Çак номĕрĕн задачи вăл—Совет влаçĕ пулни 20 çул тултарнă вăхăтра партипе советсем халăха обшчествăла-политикăла пурнăçа мĕнле хутшăнтарнине кăтартасси. Умстатйана редактăр Н. Сухоруков çырат.

Октябĕрĕн 24-мĕшĕнчи номĕр. Политикăла, халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен, культурлă учрежденисен (колхоз клубĕ, библиотекăсем, кино, радио, харпăрхăй пултарулăх кружокĕсем, шкул, стена хаçачĕ) суйлав участкинчи ĕçĕсене кăтартас. Çак ĕçри лайăх опытсене кăтартмала, суйлав кампанине хутшăнман политпросвет учрежденисене хытă критиклемеле. Номĕр вальли материалсем организацилеме йалкорсен рейдне туса иртерес, йалкорсенчен 6 бригадă тăвас, вĕсен кашнин политпросвет учреждении ĕçĕпе тĕплĕн паллашмала.

Октябĕрĕн 26-мĕшĕнчи номĕр. Суйлав участкинче массăла-политикăла ĕç (Конституципе суйлав саккунне вĕренекен кружоксен ĕçĕ, вулавçăсемпе беседчиксен ĕçĕсем) мĕнле тăнине кăтартас. Çак материала „Пур суйлавçăсене те массăла-политикăла ĕçпе çавăрса илес“ лозунгпа парас.

Октябĕрĕн 28-мĕшĕнчи номĕр. Комсомол организацийĕ суйлав участкинче. Çамрăк суйлавçăсене комсомол суйлава мĕнле хатĕрлет. Суйлава пуçласа хутшăнакан 18 çулхи суйлавçăсене кăтартас. Малтан çамрăксене ваттисемпе тĕлпултарас. Йалти çамрăксем шкулсене, техникумсене, аслă шкулсене мĕн чухлĕ çӳрени çинчен цифăрсем парас. Çамрăксем хушшинчи паллă çынсене кăтартас. Умстатйан теми „Пирĕн çĕршыври телейлĕ çамрăксем“ (автăр Д. Мосол).

Октябĕрĕн 30-мĕшĕнчи номĕр. Пирĕн участкăри хĕрарăм суйлавçăсем. Ĕлĕкхи вăхăтри хĕрарăмсен йăвăр пурнăçне тата халхи хĕрарăмсен-колхозницăсен телейлĕ пурнăçне кăтартас. Совет влаçĕ нумай ачалă амăшĕсене (государствăран пособи илекен Йевдокийа Йеремчук примерĕ тăрăх) пулăшни çинчен каласа парас. Йалсовет хĕрарăм депутатне (Панькова, Бахмацкайа йулташ), хĕрарăм учителницăна (К. Репмея), стахановкăна (Ганна Фирова), колхоз правлени членĕнче ĕçлекен хĕрарăмсене кăтартас, „Октябĕр револьуци XX çул тултарнă тĕле хĕрарăмсем мĕн турĕç“ йатлă умстатйана Татйана Саваренчук çырат.

Стена хаçачĕн нойабĕрĕн 2, 4 тата 6-мĕшĕнче тухакан номĕрĕсем Социалисăмла Аслă револьуци 20 çул тултарнă йатпа тухаççĕ. Çак номĕрсенче пирĕн социалисăмла çĕршыв Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе мĕнле çитĕнӳсем тунине кăтартмала. Трудолюбовск йалсоветĕнчи хресченсене Совет влаçĕ мĕн пачĕ. Йежов йачĕпе тăракан колхоз историйĕ. Стариксем, хĕрарăмсем, çамрăксем, пионерсем Октябĕрти Социалисăмла револьуци 20 çул тултарнине, Аслă Совет суйлавне мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илни çинчен каласа панисем. Пирĕн çĕршыври çĕнтерӳлĕ социалисăмăн аслă документчĕсем пулса тăракан Сталинла Конституципе суйлав саккунĕ çинчен тĕплĕн каласа памала. „ССР Сойузĕнчи халăхсен историн кĕске курсĕ“ йатлă кĕнекерен Социалисăмла Аслă револьуци çинчен калакан вырăнсене илсе пичетлес. Револьуцийе тата граждан вăрçине хутшăннисен аса-илĕвĕсене пичетлес.

Нойабĕрĕн 9-мĕшĕнчи номĕр. Тема: „Участкăри суйлав комиççи ĕçĕ“. Участкăри суйлав комиççин пĕр ĕçкунĕн фото-ӳкерчĕкне (комиççи председателĕ, участкăри суйлав комиççи членĕсем, комиççине кам килчĕ, мĕнле ыйтусемпе, çав ыйтусене мĕнле татса панă) парас. Участкăри суйлав комиççи суйлавçăсен жалăбисене мĕнле пăхса тухат.

Нойабĕрĕн 12-мĕшĕнчи номĕр. Номĕрĕн теми: „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйласси тата тепĕр уйăх йулчĕ. Суйлава епĕр мĕнле хатĕрленсе çитнĕ“. Кунта суйлава мĕнле хатĕрленсе пынин результачĕсене тĕплĕн каласа памала. Пур çитменлĕхсем çинчен те сарлакан критиклесе тухмала. Материалсене организацилеме йалкорсен иккĕмĕш рейдне туса иртермеле. Йалкорсен бригадисемпе суйлавăн организацилĕ ĕçĕсене тĕрĕслесе тухмала (суйлавçăсен спискисене туса çакнă-и, совет çурчĕсенче суйлавçăсене çав спискăсемпе паллашма майсем туса панă-и, суйлавсем иртермели çуртсем мĕнле, т. ыт. те). Массăла-политикăла ĕçсене те çавăрса илмеле (Сталинла Конституципе суйлав саккунне вĕренесси мĕнле пырат, вĕсене вĕренме пур суйлавçăсене те йавăçтарнă-и, хăласа илеймен ыйтусене суйлавçăсене мĕнле ăнлантарса параççĕ т. ыт. те). Хĕрарăм суйлавçăсем хушшинчи ĕç (хĕрарăм суйлавçăсене пурне те суйлава кăлармай пултăр тесе мĕн тунă, суйлав кунне ачасене пăхас ĕçе мĕнле организациленĕ, т. ыт. те) Почтă тата колхозри писмоносецсем мĕнле ĕçлени çинчен, хаçатсене тата суйлав материалĕсене вĕсем вăхăтра çитерсе тăраççĕ-и—çавсем çинчен тĕплĕн каласа памала. Политçутпай учрежденисем суйлав ĕçне мĕнле хутшăнса ĕçлени çинчен çутатса памала.

Нойабĕрĕн 14-мĕшĕнчи номĕр. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама художествăлă кружоксем мĕнле хатĕрленсе пынине. Вĕсем историлле куна—1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕшне—мĕнле паллă туса иртерме хатĕрленнине кăтартмала.

Нойабĕрĕн 16-мĕшĕнчи номĕр. Ку номĕре суйлав вăхăтĕнче тĕне хирĕç кĕрешес ĕç çинчен, тĕне хирĕç пропагандă мĕнле пыни çинчен çырса кăлармала. Тĕнĕн совета хирĕçле, совета сийенлĕ ĕçĕсене вырăнти материалсемпе кăтартса памала. Пупсемпе сектантсем, пурнăçран кайарах тăрса йулнă уйрăм колхозниксемпе колхозницăсене мĕнле хăйсем майлă çавăрма пултарнине кăтартса тăрă шыв çине кăлармала.

Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнчи номĕр. Ку номĕрте ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама уйрăм колхоз çемйисем мĕнле хатĕрленни çинчен çырмала. 8 суйлавçăлă Рйазанцев колхозник çемйине, 6 суйлавçăлă Мосол колхозник çемйине тĕплĕн кăтартса памала.

Нойабĕрĕн 20-мĕшĕнчи номĕр. Халăх сучĕ суйлавçăсен жалăбисене мĕнле пăхса тухнисене кăтартса памала. Суйлав кампани вăхăтĕнче халăх сучĕ пăхса тухнă паллăрах, интереслăрах ĕçсем çинчен çутатмала. „Совет сучĕ халăхăн интересĕсене, хамăр çĕршывăн интересĕсене сыхлас ĕçре“ йатлă умстатйана йалти суд председателĕ А. Ковтун йул. çырат. Çак номĕртех тата ĕлĕк патша сучĕсем експлоататăрсен интересĕсене мĕнле сыхласа тăни çинчен ваттисем аса-илнине кĕртмеле.

Нойабĕрĕн 22-мĕшĕнчи номĕр. Йалти интеллигенци (учителсем, врачсем, агрономсем, зоотехниксем т. ыт. те) суйлав умĕн.

Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнчи номĕр. Суйлава мĕнле иртермели çинчен (суйлав ăçта, мĕнле çуртра пулса иртмеле, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче мĕнле йĕркепе сасăламала) çырмала. Умстатйине „Суйлава пур суйлавçăсем те тухмала“ тенĕ йатпа çырмала.

Нойабĕрĕн 26-мĕшпе 28-мĕшĕнчи стена хаçат номĕрсене план тăрăх Запорожск суйлав округĕнчен ССР Сойузĕн Аслă Советне тата Национальнăççен Советне палăртнă депутатсен кандидатурисем çинчен çырса кăлармалаччĕ. Анчах, кандидатурăсене малтантарах палăртса, сӳтсе-йавма тытăннă пирки, ку номĕрсене васкарах, кандидатурăсене палăртма тытăннă майăнах кăларма тытăнмалă.

Кун хыççăн вара номĕртен номĕрех ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлав округĕсем тăратнă кандидатурăсем çинчен суйлавçăсем тухса каланисене çырса кăлармала, палăртнă кандидатурăсемшĕн сарлака агитаци сарса пымала.

Суйлав умĕнхи йулашки номĕре „Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйлама Ленин—Сталин партин йалавĕсем айĕнче çирĕп ретсемпе пырăр“ йатлă лозунгпа кăлармала. Ку номĕрте суйлавçăсем суйлава пĕтĕм халăхăн аслă праçникне хатĕрленнĕ пек хатĕрленни çинчен, хăйсем суйлава мĕнле кайасси çинчен, ку праçнике килте мĕнле иртерме хатĕрленни çинчен, колхозсемпе йалсовечĕсем хăйсен суйлавçисене суйлава мĕнле кăларасси çинчен, вĕсем суйлавçăсене лавсемпе машинсем мĕнле-мĕнле парасси çинчен тĕплĕн çутатса параççĕ. Ку номĕре хитрелетсе, илемлетсе кăлармала. Вăл праçник чухне тухакан номĕр пек пулмала.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, историлĕ суйлав кунĕнче, пĕр номĕр кăна мар, темиçе номĕр стена хаçачĕ кăларма палăртса хунă. Вăл номĕрсенче суйлав мĕнле иртсе пынисене, суйлавçăсем суйлава мĕнле пынисене, халăхăн савăнăçне кăтартса памала, хăйсен бӳллетенĕсене суйлав йешчĕкне йама ĕлкĕрнĕ суйлавçăсем тухса каланисене кĕртмеле.

Çакăн пек ĕнтĕ „Путь к социализму“ стена хаçат редколлегийĕ примерлă пла-

СУЙЛАВ УМĔНХИ КАНАШЛУСЕМ

Суйлавçăсем хăйсен кандидачĕсене саламлаççĕ

Тăван çĕршывăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăлатпăр

Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче Вăрнарта суйлав умĕнхи районри пуху пулса иртрĕ. Пухура пĕтĕмпе пин çын ытла пулчĕ. Коļцовкări пуçламăш парти организацин секретарĕ Гусев йулташ сĕннипе 17 çынран пухун ĕçлĕ президиумне суйласан, сăмах Мамалайри Ворошилов йачĕпе тăракан колхоз председателĕ Герасимов йулташ илет. Вăл пухун хисеплĕ президиумне суйлама сĕнет.

— Сталин!

Аслă çулпуçĕн йатне асăнсан пуху нумайччен алă çупат. „Сталина урра", „Сывă пултăр аслă Сталин!" „Урра!", кăшкăрни нумайччен йанăрат. Пуху лăпланат. Унтан хисеплĕ президиума Сталин йулташăн çывăх соратникĕсене—**Молотов, Каганович, Ворошилов, Йежов, Калинин, Жданов, Андрейев** тата **Чубарь** йулташсене суйлаççĕ. **„Сталинăн чи çывăх соратникĕсем сывă пулччăр!, „Урра!"** кăшкăрни çĕкленнĕ-çем çĕкленет.

Чи малтанах Белков йулташ сăмах илсе, ССР Союзĕн Геройĕ **П. И. Пумпур** йулташăн биографине паллаштарчĕ, П. И. Пумпур йулташ социалисăмла çĕршыв оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе тĕлĕнмеле ĕçсем туни çинчен каласа пачĕ. Унтан Герасимов йулташ ССР Союзĕн паллă Геройĕ **В. П. Чкалов** йулташăн биографине, унăн сывлăшри пултарулă та хăйулă ĕçĕсем çинчен каласа парат.

— Союз Советне депутата суйлама палăртнă кандидата— **Андрей Михайлович Краснов** йулташа сăмах паратăп,— тесе пĕлтерчĕ пуху председателĕ.

Андрей Михайлович Краснов йулташа пуху вăйлăн алă çупса кĕтсе илчĕ.

А. М. Краснов йулташ сăмахĕ

— Сире, Сталин тапхăрĕнчи чи телейлĕ çынсене хĕрӳлĕ салам! **(Алă çупаççĕ).** Йулташсем! Пирĕн пурнăç савăнăçлă та телейлĕ. Епĕр пĕрле пухăнатпăр, коллективпа пĕрле ӳстсе-йавса çĕршывăн чи лайăх çыннисене влаçăн аслă органне хамăр суйлатпăр. Пирĕн çĕршывра халичченех тĕнчере пулман чăн-чăн халăх геройĕсем ӳсеççĕ. Вĕсене пире пурне те Ленин тата Сталин пачĕ, вĕсене пурне те коммунисен партийĕ тата совет правителстви ӳстерчĕ. Епĕ те Сталин йулташ вĕрентсе, вăл кăтартса панă çулпа тӳр пырса ситĕнтĕм, ӳсрĕм,—тет А. М. Краснов йулташ.

— 1934 çулта, суркунне, мана парти организацийĕ Тури Ачакри Йухăма пуçланă колхоза çирĕплетме йачĕ. Малтанхи кунсенче ĕçлеме питĕ йăвăр пулчĕ. Йалти кулаксем сăтăрла ĕçсем туса, пирĕн ситĕнӳсене пĕтерме тытса чарасшăн пулчĕç. Пуйан та куļтурлă пурнăç тума чăрмантарса пычĕç. Парти организаци пулăшнипе, массăна çывăх çыхăнса ĕçлесе пур йăвăрлăхсене те çĕнтерĕмĕр. Чипер, маскăланса, сăтăрла ĕçсем туса пурăнакан тăшмансене тăрă шыв çине кăлартăмăр, вĕсене хамăр хушăртан кăкларăмăр. Колхоз çирĕпленсе, ӳсе пычĕ. Колхоза политикăлла хуçалăх йенчен тĕреклетес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕшĕн, пысăк тырпул туса илнĕшĕн Совет правителстви 1935 çулта мана Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалавĕн орденĕпе наградăларĕ. Халĕ пирĕн колхоз—нумай тырпул туса илекен колхоз. Пирĕн колхозниксем пуйан та куļтурлă пурнăçпа пурнаççĕ, мĕн кирлĕ, çавă пур, пурте ситеклĕ. Кадрсем те ӳсрĕç.

Çак ситĕнӳсем мĕнле майпа пулчĕç? Епĕ йаланах колхозниксемпе пĕрле пулнă, вĕсемпе çирĕп çыхăну тытнă, вĕсене ĕçлеме вĕрентрĕм. Хамăн вăйа, пултарулăха, пĕлӳе колхозниксен пултарулăхĕпе пĕрле пĕрлештерсе, çав пĕрлешӳпе пултарулăхпа вăйа пирĕн аслă Сталин вĕрентнĕ ĕçсене пурнăçлама организацилерĕм. Массăна тачăн çыхăнсан, Ленин—Сталин партийĕн вĕрентнине пурнăçласа пырсан кăна, пирĕн ситĕнӳсем пысăкран та пысăк пулма пултараççĕ. Ĕçхалăх массине Сталин йулташ йуратнă пек йуратмала. Вĕсене вĕрентмеле, йăнăшĕсене тӳрлетме пулăшмала. Массăпа мĕнле ĕçлемелине епĕ Сталин йулташран вĕрентĕм. Хамăн кулленхи ĕçре Сталин вĕрентнине пĕтĕм чĕререн пурнăçласа пытăм, малашне те Ленин—Сталин парти ĕçне чĕререн туса пыма пулатăп.

Пире Сталин йулташ сыхăлăхлă пулма вĕрентет. Ĕççыннисен тăшманĕсем тĕрлĕ маскăпа тăхăнса витĕнсе пурнаççĕ, вĕсем чи тискер, чи ирсĕр те усал сăтăрла ĕçсем тăваççĕ. Çавăнпа та Сталин йулташ сыхăлăхлă пулмали çинчен вĕрентнипе асра тытмала. Хамăр вăйпа тунă телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çине тата ситĕнӳсем çине пăхса лăпланмала мар. Халăх тăшманĕсене палласа илме пĕлмелле, вĕсене тымарĕпех кăкласа пăрахмалла. Сире, суйлавçăсене, епĕ халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухарин тата буржуалла-националла фашиссен агентĕсене хирĕç пĕтĕм вăйпа, боļшевикла хайарлăхпа тата кураймаллăхпа кĕрешсе пыма сăмах паратăп. Хамăн сыхăлăха ӳстеретĕп—çирĕп сыхăлăхлă пулатăп.

Мана, сирĕн çак кайарах нимĕн правасăр пулнă чухăн çын хресчен ачине, ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата палăртнишĕн епĕ питĕ савăнатăп, мухтанатăп. Çак пысăкран та пысăк хисепе хамăн суйлавçăсен шанăвне тивĕçлĕ пулатăп. Малашне те аслă Сталин вĕрентнине чĕререн пурнăçласа пулатăп. Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн, ĕççыннисен телейĕ тата савăнăçлă пурнăçĕшĕн пĕтĕм вăйа, пĕлӳпе, пултарулăха, кирлĕ пулсан, хамăн пурнăçа паратăп. Сывă пултăр аслă Сталин! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ. „Телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн спасибă Сталин йулташа!" „Урра!").**

А. М. Краснов йулташ хыççăн Вăрнар МТС-чи агроном Шчербаков йулташ, Коļцовкări Сталин колхоз членĕ Йерошин йулташ тата Кӳлхĕрринчи „Трактор" колхозĕнчи килнĕ Флегентов йулташ тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте хăйсен колхозĕсенчи суйлавçăсен Чкалов, Пумпур тата Краснов йулташсемшĕн сасăлаççĕ тесе, ытти суйлавçăсене те вĕсемшĕн сасăлама чĕнчĕç.

Суйлавçăсем патне çыру йама йышăнсассăн, пуху хупăнчĕ.

Вăрнар районĕнчи суйлав умĕнхи пуху Вăрнар тата Елĕк районĕсенчи суйлавçăсем патне йанă çыру

Вăрнар районĕнчи суйлав умĕнхи пуху, Вăрнар районĕнчи предприйатисен тата колхозсен ĕççыннисен пĕрлехи пухувĕсем пирĕн социалисăмла çĕршыв оборонине тĕреклетессишĕн вĕçĕ-хĕррисĕр тăрăшса ĕçлекен ССР Сойузĕн Геройне, ордононосец П. И. Пумпур йулташа Вăрнар Округĕ тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националĕнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртасси çинчен тата сывлăш талкăшне çĕнтерсе илекен—ССР Сойузĕн Геройне В. П. Чкалов йулташа Горький суйлав округĕ тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националĕнăçсен Советне депутата суйлама кандидата палăртасси çинчен пĕр сасăпа йышăннине пĕтĕм чĕрери хаваслăхпа ырлат.

Çавăн пекех „Крестьянская газета" колхоз председателне, ордононосец А. М. Краснов йулташа Сойуз Советне депутата суйлама кандидата палăртнине Вăрнарти суйлав умĕнхи пуху пĕтĕм хаваслăхпа тата мухтавлăхпа ырлат.

Епĕр, суйлав умĕнхи пухува килнисем, декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, пурсăмăрта пĕр çын пек пулса хамăр сасăсене сире— П. И. Пумпур йулташ, В. П. Чкалов йулташ, А. М. Краснов йулташ, паратпăр.

Епĕр сире хаклă йулташсем, наказ паратпăр: никам çĕнтереймен Ленин — Сталин йалавне çӳлерех çĕклĕр, халăх тăшманĕсене—троцкиссене, бухаринçăсене тата буржуалă националиссене хирĕç татах та хайарран кĕрешĕр. Сталинла Конституцине пурнăçа кĕртессишĕн тата Совет Сойузĕнчи ĕççыннисен телейлĕхĕшĕн çирĕп тата тӳррĕмĕн кĕрешĕр.

Епĕр, суйлав умĕнхи пухура пулнисем, Вăрнар тата Елĕк районĕнчи пĕтĕм суйлавçăсене **В. П. Чкалов, П. И. Пумпур, А. М. Краснов** йулташсемшĕн сасăлама чĕнетпĕр. Пĕтĕм ĕççыннисене коммунисен партийĕ тавра, тĕнчери ĕççыннисен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра татах та çирĕпрех пĕтĕçме чĕнетпĕр.

★ О ★

Колхозниксем пуйан та куļтурлă пурнаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Лапри Чăрăшкасси хресченĕнсен пурнăçĕ кашни çул, кашни кун лайăхланса пырат. Колхозниксем тăрăшса ĕçлесе тыр тухăçне ӳстерсе пыраççĕ. Кăçал вăтам шутпа гектартан 22,76 центнер тырă тухнă. Вăл шутран: кĕрхи тулă гектар пуçне 24,30 центнер, „Диппе" суртлă сĕлĕ 27,61 центнер, урпа 25,22 центнер, викă 33,35 центнер илнĕ. Кăçал колхозра кашни ĕçкунĕ çине 30 шар кĕревке тырă валеçеççĕ. Уйрăм çемйесем 350—400-шер пăт тырă илеççĕ. Кунсăр пуçне иртнĕ çулта колхоз пĕчĕк електростанци лартнă. Пайанхи куна йалта колхоз правленине, лашасен витине, шкул çуртне тата 45 колхозник килне електричествă кӳртнĕ. Кашни колхозник килĕ хаçат-журналсем çырăнса илнĕ. Колхоз правленине пухăнса радио итлеççĕ.

В. Василйев.

Ӳкерчĕк çинче: Грачев М. А.—Ишлей районĕнчи Шурча суйлав участкинче довереннăй пулса ĕçлет; 2) Владимиров К. В. —Ишлей районĕнчи Обраскина, Тивĕш, Автанкасси йалĕсенче довереннăй пулса ĕçлет. **Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.**

Патăрйел районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

Нойабĕрĕн 24-мĕш. Шăп виçĕ сехет тĕлне Патăрйелти колхозниксен çурчĕн аслă залĕ çынсемпе тулат. Сценă çине Патăрйелĕнчи „Ленин çулĕ" колхозри стахановкă Губанова йулташ тухат, вăл кĕске сăмах каласа канашлăва уçат. Унăн чи малтанхи шухăшĕ аслă Сталин çинчен. Сталин йулташ йатне аса илсенех пĕтĕм залăри çынсем савăнаçлăн, хаваслăнса ала çупаççĕ.

Канашлу президиум суйлат. Президиумра колхозниксем лараççĕ. Кун йĕркине çирĕплетсенех сцена çине пĕрин хыççăн тепри тухса, колхозниксем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама палăртнă Чкалов В. П., Спасов Л С. Харитонова О. Т. йулташсем çинчен сăмах калаççĕ.

Чи малтанах трибунă умне „Ленин çулĕ" колхоз членĕ Селенин йулташ тухса тăрат. Унăн сӳçĕсем кăвак, анчах чунĕ çамрăк.

— Пиртен нумайăшĕ Лука Семенович Спасов йулташа лайăх пĕлеççĕ. Мĕншĕн тесен, вăл хамăр хушăрах тухнă çын. Спасов йулташ чухăн çын ывăлĕ. Вăл 14 çултан пуçласах обчăла ĕçре хĕрӳлĕ кĕрешет. Вăл çамрăклах Хусанта патша йыттисене—жандармăсене хĕçпăшалсăрлантарса вĕсене хăйне парăнтарат. Граждăн вăрçи пынă чух Спасов йулташ нимрен ытла Поļшăн шурă бандичĕсемпе кĕрешессинче хăйне паттăрлăхне кăтартат. Вăл çак вăрçăра хыта аманат. Анчах унăн вăйĕ чакмаст. Вăл социалисăм строителствинче мĕн пур вăйĕпе чĕререн тăрăшса ĕçлет. Пирĕн Чăваш правителствине кĕрсе кайнă тăшмансене та сатнă хыççăн колхозниксем йалан калатчĕç:

— Хамăр Спасова илсе килесчĕ-ха Горькинчен,—тетчĕç. Пирĕн емĕт пурнăçланчĕ. Парти Тĕпкоме пирĕн пата Спасов йулташа ĕçлеме йачĕ. Епĕр уншăн чĕререн савăнтамăр. Епĕр Лука Семенович Спасов йулташа Сойуз Советне суйлама сасăлатпăр.

Çĕн Ахпӳрт йалсовет председателĕ О. Каштанова йулташ питĕ хĕрӳлĕ сăмах каларĕ.

Епĕр Аслă Совета Ленинпа Сталин ĕçĕшĕн кĕрешекен çынсене пĕр кăмăлпа суйлатпăр. Чкалов йатне асанса саваннипе хаваслăх çĕкленет. Унăн çирĕп паттăрлăхĕ кашнине герой пулма хавхалантарат. Спасов йулташ ĕççыннисен интересне чĕререн тăрăшса сыхлакан çын. Ун патне хутте хăçан пырсан та, вăл ĕçхресченĕпе кăмăлтан калаçма вăхăт тупат, мĕн ситмест, мĕн кирлĕ ăна тупса парат.

Оļга Тихоновна Харитонова йулташ ĕçре вут пек çуннă, вăл йăвăрлăхсене çĕнтерсе нумай çĕнтерӳсем тунă. Унăн çуртне класс тăшманĕсем кураймасăр çунтарса та йачĕç, анчах Харитонова йулташ ала усса лармарĕ, тăшмансемпе тата хыта кĕрешме пуçларĕ. Хаļ вăл пулăшса пыракан колхозсем районĕпе паллă колхозсем, вăл ĕçлекен туллимар вăтам шкул пуриншĕн те примерлă шкул.

Харитонова çавăн пек пысăк та лайăх ĕçсем туни пур ĕçхĕрарăмĕсене те калама çук савантарат, хумхантарат.

Çавăнпа та ĕнтĕ хаļ пирĕн колхоз хĕрарăмĕсем мана çапла каларĕç:

—Есĕ канашлăва кайсан пирĕн шухăша та кала, епĕр Аслă Совета суйлама Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсемшĕн чĕререн савăнса сасăлатпăр, ĕçре вĕсем пек пиçĕ, маттур пулма тăрăшатпăр,—терĕç.

Хирти Сĕнтĕрти туллимар вăтам шкулта вĕрентекен Кручков учител Харитонова йулташăн шкулти паха ĕç опычĕсем çинчен кĕскен каласа пачĕ. Кунпа пĕрлех вăл Оļга Тихоновна колхозсем организацилес, вĕсене çирĕплетес ĕçре нумай вăй хунине палăртрĕ.

Молотов йачĕпе тăракан колхоз членĕ Дергунов йулташ Харитонова йулташ 1919—20 çулсенче хĕрарăмсем хушшинче мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕ.

Канашлу Патăрйел суйлав округĕнчи пур суйлавçăсене те Чкалов, Спасов, Харитонова йулташсене Аслă Совета пĕр саслăн суйлама чĕнӳ йышăнчĕ.

Ф. Çитта.

Харитонова йулташ сăмахĕ

Йулташсем! Инçе мар декабĕрĕн 12-мĕш кунĕ. Тĕнчен улттăмĕш пайĕнче ирĕклĕ етемлĕх пуçласа Сталинла Конституци тăрăх хăйĕн чи демократиле суйлавне иртерет. Пирĕн çĕршыври пĕтĕм ĕçхалăх Аслă Совета суйлама хăйĕн кандидачĕсене тăратрĕ. Чи пирвайхи кандидат—епĕр чĕререн йуратакан аслă çулпуç Сталин йулташ. **(Алă çупаççĕ).** Сталин йулташа Аслă Совета суйлама чи пирвайхи кандидата тăратса епĕр вăл пире пуйан та куļтурлă çĕнĕ пурнăç туса панине палăртрăмăр. Ирĕклĕ ĕçхалăхĕ Аслă Совета суйлама пĕр сасăпа Сталинăн чи çывăх соратникĕсене, партипе правителствă руководителĕсене тăратрĕ. Вĕсемпе пĕрлех ĕççыннисем йалта ĕçлекен паха ĕçĕсене курса, вăл çынсене Аслă Совета суйлама тивĕçлĕ тесе палăртрĕç. Вăл шута епĕ те кĕретĕп.

Сирĕн шанчăкăр ман çине питĕ пысăк ответлăх хурат. Епĕ халиччен халăх тăшманĕсемпе хытă кĕрешсе пынă пулсан, вĕсемпе малашне тата темиçе хут вăйлăрах кĕрешме манăн вăй пур. Сирĕн шанчăкăра пурнăçлассишĕн епĕ куļтурă фронтĕнче, тăшмансемпе кĕрешессинче тата темиçе хут хытăрах ĕçлеме сăмах паратăп.

Сире йулташсем манăн йал хушшинчи „пĕчĕк" ĕçсене курса, вĕсене хисеплесе мана Аслă Совета суйлама тăратнăшăн чĕререн тав тăватăп. Есĕр ман çине хунă шанчăк вăл—Ленинпа Сталин партийĕн тивлечĕ.

Епĕ ĕлĕк чи хайар хĕнхур тӳссе курнă çын хаļ учителĕн хисеплĕ йатне илтнĕшĕн калама çук савăнатăп. Ĕлĕк учителсене хисеплемен, вĕсен ĕçĕ шутра пулман. Хаļхи вăхăтра ачасене коммунисла вĕрентсе ӳстерессипе парти пире шанса панă ĕç—калама çук пысăк та хисеплĕ ĕç. Çамрăк ачасене чăн-чăнах коммунисăм строителĕсем тăвас тесен, вĕсене хăвăн боļшевикла чĕрене, кăмăлна парса вĕрентмеле. Епĕ çапла тунă та, вĕсене çĕнĕ пурнăç чечекĕсене пур йенĕпе те нумай пĕлекен çынсем пулма вĕрентнĕ. Хаļ йĕри-тавра кĕçĕн, вăтам, аслă шкулсем сарăлса лараççĕ, унта вĕренме кашниййĕнех пур условисем те пур. Ĕлĕк апла марччĕ. Епĕ Чĕмпĕр шкулне вĕренме кĕме тесе кайрăм та, пуйансен ывăл-хĕрĕсене пăтшар пыл взяткă панăшăн вĕренме илсе йулчĕç, пире, чухăн ачисене, кайала тавăрса йачĕç.

20 çул ĕлĕк епĕр, пуринчен ытларах ĕççынни хĕрарăмсем çын шутĕнче пулман. Выļăха вăрласассăн вăррисене тытсан суда панă, хĕрарăмсене вăрласассăн нимĕн те туман. Хаļ совет влаçĕнче пире патшалăха йертсе пырас чи аслă ĕçе суйлаççĕ. Пирĕн аслă учител Владимир Илйич Ленин кашни кухаркăна патшалăха йертсе пырас ĕçе хутшăнтарас тени чăн-чăнах пурнăçланчĕ.

Пĕтĕм тĕнчери мул хуçисем пирĕн патшалăхри ĕçхалăхĕ çĕнĕ пурнăç туса лайăх пурăннине кураймаççĕ, хăйсен вилĕмĕ çывхарса килнипе сиссе пирĕн патшалăха пĕтерме шутлаççĕ. Вĕсем кунта шпионсем, диверсантсем йараççĕ, пире хирĕç вăрçăпа тухма хатĕрленеççĕ. Анчах тăшман темле тапăнсан та пиренихçан та çĕнтерейес çук, мĕншĕн тесен пире Ленинпа Сталин партийĕ, унăн аслă çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пырат.

Хаļ Испани ĕçхалăхĕ саккунлă правителствăна хирĕç тухнă мйатежниксене тата интервентсене хирĕç кĕрешет, Китай ĕçхалăхĕ Йапони интервенчĕсене хирĕç кĕрешет. Испанипе Китай ĕçхалăхĕсем хăйсен хайар тăшманĕсене çапса салатса ирĕке тухĕç.

Сывă пултăр çывхарса килекен пĕтĕм тĕнчери революци!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери ĕçхалăхĕн çулпуçĕ аслă Сталин йулташ.

нĕ. Тепĕр хут асăрхаттаратпăр, ку план вăл условнăй план кăна, ăна вырăнти ĕçсемпе йĕркесене кура улăштарса пымала.

Ку планра суйлав умĕн туса иртермели паллă ĕçсемпе ыйтусене тĕплĕн сутатса панă. Вăл пур редколлегисене те пысăк пулăшу пама пултарат. Çав планăн пахалăхĕ çавăнта пулса тăрат те ĕнтĕ.

Суйлавçăсен массисемпе тачăрах çыхăнмала

Йалкорсен активĕн çĕнĕ кадăрĕсене вĕрентсе ситĕнтерер

Пирĕн боļшевикла пичетĕн вăйĕ массăсемпе тачă çыхăнса ĕçленинче. Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыракан боļшевикла пичете массăсем хăйсен аллисемпе туса пыраççĕ. Малта пыракан боļшевикла хаçат ĕçйалкорсен, вулакансен активĕпе çыхăнса тăрат. Вăл хăйĕн корреспонденчĕсемпе вулаканĕсенчен темĕн чухлĕ çырусемпе заметкăсем илет. Ку вăл хаçата халăхăн настройенине, унăн шухăшне, унăн ыйтуне лайăх пĕлсе тăма, хамăрăн савăнăçлă та куļтурăлă пурнăçăн тĕрлĕ тĕслĕ пуйанлăхĕсене тĕрĕс сутатса пыма, вулакансен тĕрлĕ ыйтăвĕсем çине вăхăтра çавăрăнса лăхма пĕлме пулăшат. Боļшевикла хаçатăн активĕн ретĕнче чи лайăх, паллă çынсем —ордононосецсем, стахановецсем, хăйсен ĕçне витĕр пĕлсе ĕçлекен маçтерсем. Вĕсен опычĕсене хаçат хăйĕн страницисем çинче сутатса пырат. Йалкорсемпе вулавçăсем хăйсен хаçачĕсем урлă социалисăм строителствин пур участкисенчи ĕçсен ситменлĕхĕсемпе киревсĕрлĕхĕсене сутатса пыраççĕ, халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăлараççĕ, йурăхсăр руководителсене критиклеççĕ. Боļшевикла хаçат, халăхăн сарлака массисемпе тачă çыхăнса ĕçлесен, питĕ те пысăк вăйă пулса тăрат. Массăсемпе çыхăнман, массăсенчен уйăрлса кайнă хаçат пирĕн ĕçе нимĕнле усă та пама пултараймаст.

Çаксем ĕнтĕ вĕсем пĕтĕмĕшпех колхозсенчи стена хаçачĕсене те тивеççĕ.

Пуринчен ытла стена хаçачĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче массăсемпе çыхăнса ĕçлессине вăйлатса, çирĕплетсе пымала, хăйĕн тавра çĕнĕрен йалкорсен активне ситĕнтерсе, вĕрентсе ӳстермеле. Стена хаçачĕн ĕçне редколлеги суйлавçăсене мĕн чухлĕ нумайтарах хутшăнтарат, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе стена хаçачĕн ĕçĕ çавăн чухлă лайăхрах та тивĕçлĕрех пулса пыма пултарат. Колхозниксемпе колхозницăсене йалкорсен ĕçне çĕнĕрен те çĕнĕрен хутшăнтарса пырса, хаçат пысăк партилĕ ĕç тăват, граждăнсен çĕнĕ массисене политикăла ĕçе активлăн хутшăнтарат.

Ку тĕлĕшпе „Путь к социализму" стена хаçачĕ пуриншĕн те образец пулса тăрат. Вăл колхозниксемпе колхозницăсене стена хаçачĕн ĕçне хутшăнтарса вĕсене йалкорсен ретне çĕнĕрен йавăçтарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса пырат. Йежов йулташ йачĕпе тăракан колхозра мĕн пурĕ 56 хуçалăх, а стена хаçачĕн 35 йалкор шутланат!

Йалкорсен çĕнĕ кадăрĕсене вĕрентсе, ситĕнтерсе ӳстерес тĕлĕшпе парти организацийĕ йертсе пынипе пулса пыракан массăлă-организацилĕ ĕç нумай пулăшат. Редколлеги колхозниксемпе, колхозницăсемпе çамрăк суйлавçăсемпе калаçусем туса иртерет. Ыйтусемпе ответсен вечерĕсене тăват. Йалкорсен пухувĕсене колхозниксемпе колхозницăсене нумайтарах чĕнет. „Путь к социализму" стена хаçачĕн йалкорĕсен ретĕнче йалти чи лайăх çынсем: стахановецсем, ударниксем, интеллигентсем тăраççĕ. Стена хаçачĕ массăпа çыхăну тытассине çирĕплетсе пынипе пула та ĕнтĕ ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас умĕнхи ответлă тапхăрта хăйĕн умне лартнă коллективлă пропагандис, агитатор тата организатор ĕçĕсене ăнăçулă туса пырат.

1937 çулхи октаберĕн 3-мĕшĕнче тухнă „Правда" хаçатра Горький облаçĕнчи Богородск районĕнчи Лукино йалĕнчи колхозник-агитатор—А. Чернобровцев й. хăйĕн суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçленĕ ĕçĕн опычĕсем çинчен çапла каласа парат:

„Епĕр час-часах „Голос колхозника" йатлă стена хаçачĕ кăларса тăратпăр. Унта пуринчен ытларах çĕнĕ Конституципе ситес суйлавсем çинчен çыратпăр. Пирĕн йалта ватă çынсем пур. Вĕсем хутла сахал пĕлеççĕ. Хăшĕсем ку таринччен те ал пусма та вĕренсе ситеймен-ха. Анчах вĕсем политикăла ыйтусемпе питĕ те интересленеççĕ. Ĕнтĕ епĕр „усткорсен", тепĕр тĕслĕ каласан—сăмахпа каласа паракансен институтне туса хутăмăр. Çынсем ман пата тĕрлĕрен ыйтусемпе, тĕрлĕрен сĕнӳсемпе пыра-пыра каласа параççĕ. Епĕ вĕсен сăмахĕсене çырса йулатăп та стена хаçачĕ çине кĕртетĕп. Ун пек корреспондентсен шучĕ ман 20 çынран та иртет. А нумайăх та пулмаст вĕт-ха, вĕсем йалта „чи ниçта та хутшăнман" граждăнсем вырăнче шутланаччĕç".

Колхозниксемпе колхозницăсен сарлака масси пичет ĕçне хутшăнса ĕçлесси, йалкорсен ретне хутшăнса пырасси кунран кун ӳссе пырат. Ку вăл пирĕн социалисăмла çĕршывăн граждăнĕсен политикăпа куļтурлăхĕ ӳссе пынине кăтартакан пысăк тĕслĕхĕсенчен пĕри пулса тăрат. ССР Сойузĕн Аслă Советне Сталинла Конституци тăрăх пĕтĕм халăхпа чи малтанхи хут суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе пыракан историле кунсенче кашни стена хаçачĕн массăпа çыхăнса ĕçлессине вăйлатса, йалкорсен ретне çĕнĕ —колхозлă йалăн малта пыраканĕсене, боļшевикла партин помошникĕсене, политикăла активлă боецсене хутшăнтарса пымала.

* * *

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама пирĕн вăйлă çĕршыв пĕтĕм халăхăн аслă праçникне хатĕрленнĕ пек хатĕрленсе пырат.

Совет Сойузĕнчи халăхăн политикăла творчествăла активлăхĕ чикĕсĕр сарлака, вăл хăйĕн çĕршывне йуратни, Ленин—Сталин партине йуратса ĕçлени етемлĕх каласа параймиш пысăк та хăватлă.

Çавăн пек йуратăва, çавăн пек чĕререн ĕçленине Совет Сойузĕн Сойуз Советне тата Националĕнăçсен Советне депутатсем палăртас тĕлĕшпе пулса иртекен пухусенче рабочисем, колхозниксем, пĕтĕм ĕçхалăхĕ чĕререн тухса каланисем питĕ те лайăх кăтартса параççĕ. Вĕсем хамăр çĕршыва, боļшевикла партийе, хамăрăн социалисăмла çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене мухтаççĕ, вĕсене Совет Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама палăртаççĕ. Социалисăмăн ситĕнĕвĕсене тума хаваслантарса пыракан организатора, аслă та тăван Сталина мухтаса тавтăваççĕ.

Нумай мĕлйунлă халăхăн масси хăйĕн çĕршывне, хăйĕн партине, Сталин йулташа чĕререн йуратса ĕçленине—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама пысăк производствăлă ситĕнӳсемпе пыни те питĕ лайăх та уççăн кăтартса парат.

Пирĕн çĕршывра обшчествăла-политикăла пурнăç вĕресе тухакан çăлкуçĕ пек вĕресе тăрат. Мĕн пур суйлавçăсем суйлав умĕнхи пулса пыракан ĕçсене активлăн хутшăнаççĕ. Суйлав кампани кашни кун анлăн та анлăн сарăлса пырат. Тĕнчере пĕртен-пĕр социалисăмла демократи чечекленсе пынине пĕтĕм чĕререн палăртаççĕ.

Колхозсенчи стена хаçачĕсем — боļшевикла пичетĕн кĕçĕн отрйачĕсем— историлĕ кун—1937-мĕш çулти декабĕрĕн 12-мĕшĕ—çывхарса килнĕ май, пирĕн çĕршыв пурăнса иртерекен кунсенче хăйсен политикăла ӳсĕмлĕхĕпе çӳлĕлĕхне кăтартчăр. Колхозсенчи стена хаçачĕсем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутатсем суйлама халăха боļшевикла хатĕрлесе ситерес тĕлĕшпе пирĕн партийе пулăшса пыччăр. Редколлегисемпе йалкорсем халăх тăшманĕсене пĕр ывăнмасăр, пĕр хĕрхенмесĕр палăртса, тăрă шыв çине кăларса пычăр.

Пĕртеппĕр тивĕçлĕх, пĕртеппĕр шухăш вăл—кашни стена хаçат редколлегине, кашни йалкора йертсе пырасси. Çавăн пек ĕçлесе ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама колхозри суйлавçăсене суйлава Ленин—Сталин партийĕн йалавĕпе илсе пырасси; боļшевикла партипе Совет влаçĕ, тата аслă Сталин йулташ ӳстерсе ситĕнтернĕ хамăр çĕршывăн чи лайăх [illegible] пама тăвассĕ.

Патăрйел районĕнчи суйлав умĕнхи канашлу Патăрйел суйлав округĕнчи пур суйлавçăсене те чĕнсе калаииччен

„...Епĕр Патăрйел районĕнчи колхозсен районри суйлав умĕнхи канашлăва пухăннă представителĕсем Патăрйел районĕнчи ĕççыннисемпе колхозниксен нумай пухусенче палăртнă шухăшне ырласа, колхозсемпе коллективсен йачĕпе хамăр сасса Совет Сойузĕн Геройне Чкалов йулташа, Спасов йулташа, Харитонова йулташа паратпăр. Епĕр Патăрйел суйлав округĕнчи пур суйлавçăсене те декабĕрĕн 12 мĕшĕнче сасăсенче пирĕн лайăх кандидатсемшĕн: Чкалов йулташшăн, Спасов йулташшăн, Харитонова йулташшăн пĕр кăмăлăн пама чĕнетпĕр".

Суйлавçăсем Михаил Иванович Калининпа тĕл пулни

ЛЕНИНГРАД, нойабĕрĕн 25-мĕш (ТАСС). Володарски кулӯрă çурчĕ нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче рабочисене, работницăсене, инженерсене, служащисене, килхуçи хĕрарăмĕсене пуçтарса тулса лартнă. Володарски суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлăва „Большевик“ заводĕн инженер-конструкторĕ Устинов йăлташ уçнă.

Ворошилов йăчĕпе тăракан заводăн инженерĕ Медведук йăлташ çамăх калама вăхăтра президиума Михаил Иванович Калинин пырса кĕрет. Ăна „ура“ кăшкăрса, нумай вăхăт хушши алă çупса тата „Сывă пултăр Калинин йăлташ!“, „Сывă пултăр Пĕтĕм Союз старăстиĕ!“ тесе кăшкăрса кĕтсе илеççĕ.

Трибунă çине рабочисем, инженерсем, врачсем, учительсем улăхаççĕ Пире çак канашлува йăнă ĕçсыннисен коллективĕсем пирĕн тăван çĕршывăн тӯрĕ ывăлĕсемпĕн—ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйламалли кандидатсемпĕн—Калинин тата Жданов йăлташсем пĕр çын пек—сасăлĕç, тесе вĕсем пурте.

Сăмах Михаил Иванович Калинина параççĕ. Пурте ура çине тăрса Пĕтĕм Союз старăстине, аслă Сталин соратникне саламлаççĕ.

Хăй сăмахĕнче Калинин йăлташ Социализмăн аслă çуртне тăвакан совет труженикĕн ĕç савăнăçĕ çинчен тата çав труженикĕсен хисепĕнче тăни пысăк чыс пулни çинчен калат.

Калинин йăлташ советсен çĕршывĕ капитализмăн йĕритавралăхĕнче тăнине палăртат. Çавăнпа та сыхлăха ӯстермеле тата халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларассине влаç органĕсене лайăх пулăшмала. Ленинградра шпионсем-диверсантсем, троцкисла-бухаринла вăрă-хурахсем пырса кĕмелле мар крепăç туса хумала.

Калинин йăлташăн йăлташки сăмахĕсене канашлу тăвăлла алă çупса ответлерĕ.

Канашлу Володарски суйлав округĕнчи суйлавçăсен патне чĕнсе калани яма йышăннă тата халăхсен аслă çулçуçĕ Сталин йăлташ патне саламлă çыру йăнă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

Пурăнмали çуртйĕр кооперативĕсемпе вĕсен союзĕсене пĕтермели тата пайщиксемпе расчот тумали йĕркесем çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пурăнмали çуртйĕр кооперативĕсемпе вĕсен союзĕсене пĕтермели, вĕсен аллинче тулнă çуртсене, дачăсене, предприйатисене пурăхăсене вырăнти советсемпе предприйатисене тата учреждениесене памали тата пайщиксемпе расчот тумали çакăн пек йĕркесене йышăннă:

Пурăнмали çуртйĕр кооперацин Пĕтĕм Союзри Советне пĕтерес те 1937 çулхи декабĕрĕн 25-мĕшне, пурăнмали çуртйĕр кооперацин союзĕсĕ республикăсенчи Союзĕсене пĕтерес ĕçе 1937 çулхи декабĕрĕн 20-мĕшне туса çитермелле.

Пурăнмали çуртйĕр кооперацин облаçĕсемпе крайĕсенчи союзĕсене, пурăнмали çуртйĕр кооперацин автономлă республикăсенчи союзĕсене, пурăнмали çуртйĕр кооперацин хулисемпе районĕсенчи тата дачă союзĕсене пĕтерессине—1937 çулхи декабĕрĕн 15-мĕшне туса çитермелле. Чукун çул транспорчĕн тата шыв транспорчĕн центрĕн пурăнмали çуртйĕр секцисене пĕтерессине 1937 çулхи декабĕрĕн 15 мĕшне тата пурăнмали çуртйĕр строительстви кооперативĕсене, дача строительстви кооперативĕсене пĕтерессине 1937 çулхи декабĕрĕн 15-мĕшне туса çитермеле.

Пурăнмали çуртйĕр строительстви тата дачă строительстви кооперативĕсен правленийĕсен, 1937 çулхи декабĕрĕн 10-мĕшĕнчен кайа йулмасăр, государствăран илнĕ ссудăна ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвкомĕ тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулхи октябĕрĕн 17 мĕшĕнче йышăннă постановленин тăрăх тӯлесе татма обязательстви илесси çинчен сутсе-йавма кооперативи членĕсен пĕрлехи пухуне пухмала.

Хупăнакан çуртйĕр строительстви тата дачă строительстви кооперативĕсен правленийĕсен çав кооперативсен çурчĕсене, дачăсене тата турăхĕсене вырăнти советсен, предприйатисен, учреждениесен йе организацисен çуртйĕр управленийĕсем лартнă çурт управăйушчийĕсене 1937 çулхи декабĕрĕн 15 мĕшĕ тĕлне памала.

Хупăнакан пурăнмали çуртйĕр кооперативĕсен çурчĕсенче, предпри-йатисен, учреждениесен тата организацисен аллине куçакан çуртсене, пурăнакан çынсене унтан кăларса йама йурамаст, çак çурт вĕсен аллине куçакан учреждениесене йе предприйатисене ĕç договорĕ тунипе çав çуртра пурăнакан çынсем çеç ку хисепе кĕмеççĕ.

Пурăнмали çуртйĕр аренда кооперативĕсене (ЖАКТ-сене) пĕтересси вĕсен правленийĕсен çине хунă. Ку ĕçе вĕсен 1937 çулхи декабĕрĕн 15-мĕшне туса пĕтермеле.

Хупăнакан ЖАКТ-сен çурчĕсене вырăнти советсен, учреждениесен, предприйатисен йе организацисен, çуртсем вĕсен аллине куçакансен, пурăнмали çуртйĕр управленийĕсем лартнă çурт управăйушчийĕсене уйăрса лартмала. Çуртсене парассине 1937 çулхи декабĕрĕн 15-мĕшĕ тĕлне туса çитермеле.

Вырăнти советсен 1937 çулхи декабĕрĕн 10-мĕшĕнчен кайа йулмасăр пурăнмали çуртйĕр управленийĕсене тумала, вĕсен аллинче мĕн чухлĕ çуртсем пулмалине кăтартса памала тата çурт управăйушчийĕсене уйăрса лартмала. Предприйатисен, учреждениесен тата организацисен çав срук тĕлнех вĕсен аллине куçакан çуртсене йышăнма хатĕр пулмала.

Пайщиксене пай укçине тавăрса парассине вырăнти советсем çине тата çуртсемпе дачăсем вĕсен аллине куçакан предприйатисем, учреждениесем тата организацисем çине хунă.

(ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

★ **МАЛТАНХИ ÇУЛ ПАХЧА-ÇИМĔÇ ÜСТЕРНĔ.** Кара-Кум пушхирĕн кăнтăр йенчи пайĕнче пурăнакансен хăйсем лартса тунă пахча-çимĕçĕ халиччен те пулман. Кăçал унти колхозсем пысăк тухăçлă дынйа, арбуз, сухан, кукуруза çитĕнтерчĕ. Ситес çул Кара-Кум кăнтăр йенче пахча-çимĕçсене массăлăн акма пуçлаççĕ.

★ **ПИЛĔК ÇĔНĔ ШАХТĂ.** Çак çулхи декабĕр уйăхĕнче пилĕк çĕнĕ шахтă ĕçе кĕреççĕ. Вĕсен оборудованине чи çĕнĕ техникă тăрăх тунă. Çĕнĕ шахтăсем çитес çул хушшинчех çĕршыва пĕр мĕлйун çурă тоннăран кайа мар çĕркăмрăкĕ памала.

★ **КОЛХОЗСЕМ ПРОМЫШЛЕННĂÇ ТАВАРĔСЕМ НУМАЙ ИЛЕÇÇĔ.** Оренбургри колхозсем кăçал пысăк тухăçлă тыпул туса илнĕ. Колхозсемпе колхозниксем ытлашши тыррисене кооперацине сутса промышленнăç таварĕсене илеççĕ. Йулашки икĕ уйăх хушшинче Оренбургри колхозсем 10 мĕлйун тенкĕлĕх ытла тавар илнĕ. Колхозниксем 900 велосипед, 1.500 çĕлĕкен машинă, 1.000 сехет, 1.000 патефон т. ы. те илнĕ.

★ **СТОЛИЦĂРИ АЧА САЧĔСЕМПЕ ЙАСЛĔСЕМ.** Кăçал Мускаври 101 ача сачĕ тата 66 йаслĕ тăваççĕ. Пайан куна 78 ача сачĕ ĕçлеме пуçланă тата 20-шĕ çитес кунсенче ĕçлеме пуçлаççĕ. Çĕнĕ йаслĕсенчен 45-шĕ ĕçлеме пуçланă, ыттисем çак çул пĕтнĕ çĕре уçăлаççĕ.

★ **КАЛУГАРИ БЛАГОУСТРОЙСТВĂ.** Калугăри хула совечĕ благоустройства ĕçĕ валли кăçал пĕр мĕлйун тенке йахăн расхутланă. Çак кунсенче 24 хватерлĕ çĕнĕ çурт тата 200 вырăнлă ача йасли уçнă.

★ **НОРМĂНА 1242 ПРОЦЕНТ ТУЛТАРНĂ.** Горькинчи „Новое Сормово“ заводра декабĕрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланакан сталинла рекордсен вунăкунлăхне хатĕрленес ĕç сарăлса пырат. Пиллĕкмĕш цехри М. И. Болдырев шлифовальщик халех пысăк ĕçтухăçлăхĕ кăтартнă. Вăл 7 сехетре нормăна 1.242 процент тултарнă. Çав детальсем çинче халичченех заводра никам та нормăна 200 процентран ытла тултарман. Болдырев йăлташ пĕр сменăра 218 тенкĕ те 22 пус ĕçлесе илнĕ.

★ **КРИВОРОЖЙЕРИ ШАХТЕРСЕН РЕКОРЧĔСЕМ.** Нойабĕрĕн 22-мĕшĕнче Криворожйери шахтерсем чылай паха рекордсем тунă. „Правда“ йачĕпе тăракан рудники бурильщик Кочелов хăйĕн заданине 1.050 процент тултарнă. Çав рудникрех Ладушка бурильщик пĕр сменăра 13 нормă тултарнă. Октябрьски рудникри бурильщик Степаненко хытă породăсем çинче пĕр кунхи заданине 1.660 процент тултарнă.

★ **КУЗНЕЦОВА КОЛХОЗНИЦА ШПИОНА ТЫТНĂ.** Сталин йачĕпе тăракан йалхуçалăх артелĕнчи колхозница Кузнецова (Бурйат-Монгол АСС Республики, Кйахтински район), вăрмана вутă пухма кайсан, чикĕ çывăхĕнчи тĕмĕ сумне лăпчăнса тăнă çын курнă. Вăл ун патне пырса, ăçтан килни, мĕн туни çинчен ыйтса тĕпчеме пуçланă. Йутçын хаклă хакпа хресчен тумĕ сутма ыйтнă. Кузнецова ăна йала илсе кайнă. Килнĕ çитсен, Кузнецова, упăшкине сывăхри заставăна йутçын çинчен пĕлтерме йанă, хăй „хăна“ валăçи тумтир хатĕрленĕ. Йут çын урăх тумтир тăхăнса ĕлкĕриччен пограничниксем те çитнĕ.

Допрос тусан, вăл çын пĕр йутçĕршыван пысăк шпионĕ пулни палăрнă. Ун сумĕнче кирлĕ документсем пулнă.

Кузнецова колхозницăна шпион тытнăшăн пограничнăй отрйад хаклă парнесем панă.

Вата кĕслеçĕ

Шăмăшри (Шупашкар районĕ) Волоплйанов йачĕпе тăракан колхоз членĕ Т. Николайев йăлташ пĕчĕккĕлех кĕсле калама вĕреннĕ. Халь вăл ĕста кĕслеçĕ шутланат, кĕслепе 100 тĕслĕ йурă-кĕвĕ калама пĕлет. Октябĕр уйăхĕнче пулса иртнĕ республикăри 2-мĕш радифести валăçе Николайев кĕслеçĕ хăйĕн мăçтăрлăхне кăтартса пачĕ.

Т. Николайев вата ĕнтĕ, анчах колхоз ĕçĕнче çамрăккисенчен пĕрттĕ йулмаст.

Ив. Лаврентйев.

Алексей Шдахин—Ишлей районĕнчи Вăрман Сӳктĕр суйлав участкинче довереннăй пулса ĕçлет.

Куçса çӳрекен выставкă

Улатăр хулинче нойабĕрĕн 14 и 17-мĕш кунĕсенче хула клубĕнче районри йалхуçалăх выставки пулса иртнĕ.

Йалхуçалăх выставкин комитечĕ выставкăна кăшни колхозниках кăтартмала пултăр тесе, чаплăрах експонатсене икĕ машинă çине йĕр келесе лартса колхозсем тăрăх куçса çӳрекен выставкă тума шутларĕ. Пайан-ыранах куçса çӳрекен выставкă колхозсене тухса кайат. Çак выставкă 1938 çулта вăйлă тырпул туса илес çĕрте пысăк вырăн йышăнмала.

Н К.

Радио тăрăх лекцисем итлеççĕ

ИШЛЕЙ. „Парижская Коммуна“ колхоз колхозникĕсем кăшни каçах клуба пухăнса лараççĕ. Вĕсем радио тăрăх Мускавран тата Шупашкартан парăкан тĕрлĕрен лекцисене, концертсем итлеççĕ. Лекцисене лайăхрах тăнлама 15 наушник туйаннă. Колхоз декабĕрĕн 12-мĕш тĕлне вăйлăрах радиоаппарат илме шухăшлат.

П. Архипов.

Хăмла

Кĕçкейри (Сĕнтĕрвăрри р.) „Дружба“ колхоз кăçал хăмла лартса 2.000 тенкĕ тупăш илчĕ. Колхозниксем хăмла пысăк уçă панине ăнланса илчĕç. Çавăнпа та колхоз килес çул тата ытларах хăмла лартма хатĕрленет.

В. Краснов.

Совет çĕршывĕн аслă ашугĕ

Инçетри Дагестан çĕршывĕнчен, Ашага—Сталь аулĕнчен совет халăхĕн йуратнă поечĕ, кăвар чĕреллĕ, кăвар чĕлхеллĕ Сулейман Стальски вилни çинчен пĕлтерекен хуйхăлă хыпар килчĕ.

Дагестан халăхĕпе пĕрле аслă совет çĕршывĕнчи халăхсем, совет поезийĕ хăйсен паллă ашугне, мухтавлă савăçне сухатрĕç. Халăхран тухнă поет, аслă Октябĕр революцийĕччен хăйĕн тăван халăхĕпе çав тери тискер пусмăра, йăвăр пурнăçа тӯсе курнăскер, Сулейман Стальски халăх пурнăçне, унăн хуйхисуйхине, унăн ĕмĕт-шухăшĕсене сывăх пĕлнĕ, вĕсене хăйĕн тарăн шухăшлă, витĕмлĕ те хĕрӯлĕ йурри-сĕвви-çинче йурланă. Унăн йуррисем аулран аула çитнĕ, пĕтĕм халăхăн йуратнă йуррисем пулса тăнă. Çавăншăн ăна „мулла таврашĕсем, пуйансем, патша власĕ курайман, çавăншăн ăна хăй халăхĕ йуратнă.

Аслă социализм çĕршывĕнче Сулейман Стальски Дагестан халăхĕн анчах мар, пĕтĕм совет халăхĕн йуратнă поечĕ пулса тăрат. Вăл совет саманинче тепĕр хут çамрăкланса, пирĕн вăхăтра хăйĕн чăн-чăн çамрăклăхне тупса ирĕк халăхсен телейлĕ пурнăçĕ çинчен, ирĕк халăхсен чаплă та мухтавлă çулçуçĕсем çинчен ĕмĕр манми сăвăсем çырат, ытарайми йурăсем кĕвĕлет.

Унăн сăвви-йуррисенче халăхăн тăрăн ăстăнĕ, чикĕсĕр пуйан шухăш-кăмăлĕ, совет халăхĕн чĕринче аслă тăван çĕршывăн, аслă Ленин Сталинăн çунса тăракан çуламлă йуратăвĕ, халăх паттăрлăхĕ, ĕмĕчĕ. Йĕпле хăватлă унăн Ленин çинчен, Сталин çинчен, Тăван çĕршыв çинчен çырнă сăввисем! Аулран тухнă хут пĕлмен ашугран Сулейман Стальски социализм çĕршывĕн чаплă поечĕ сӯлешне çĕкленчĕ. Ленин орденне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Дагестан халăхĕ ăна ССРС Аслă Совечĕн депутатне суйлама кандидата тăратнăччĕ... вилĕм аслă ашугăн мухтавлă пурнăçне, пултарулă ĕçне татса хучĕ.

Анчах Сулейман Стальскин манми йуррисем халăхра йулĕç. Вĕсем халичченхи пекех мĕлйуншар вулаканĕсемшĕн хаклă пулĕç, кĕрешеве, ĕçе чĕнĕç.

Стальски пурнăçĕнче, ĕçĕнче, унăн пуйан пултарулă творчествинче пире вĕренмели питех те нумай. Ăхальтен мар ăна М. Горький „XX-мĕш ĕмĕрĕн Гомерĕ“ тесе йат панă. Стальски творчествине хĕвелтухăç культурин ахахĕсем çеçсе тăраççĕ. Унăн творчестви аслă социализм культурине ĕмĕрлĕхе кĕрсе йулат. Стальски пек хăватлă, çивĕч, кăвар чĕлхеллĕ поет пуласси халăх йуратакан пулат кашни совет поечĕн, çамрăк çыракан ĕмĕтĕчĕ пулмала.

Чăваш совет писателĕсемпе поечĕсем Совет çĕршывĕн аслă ашугĕ Сулейман Стальски вилнишĕн хуйхăраççĕ.

Уйăп Мишши.

КĔСКЕН

★ **Утаркассинчи** (Хĕрлĕ Чутай районĕ) „Пйатилетка“ колхоз 18 лаша вайлĕ двигатель туйанна. Колхоз ку двигательрен тырă авăртмалли арман тăват.

★ **Патăрйел районĕнчи „РОКК“** колхоз членĕ стахановец Федор Волков йулташ семйи кăçал 1.000 ĕçкунĕ тунă. Колхоза кăçал кашни ĕçкунĕ çине 16 килограм тĕштырă тивет. Çапла вара Волков йулташ пин пăт тĕштырă илет.

◆ **Почтальон Кирилл Сорокин** йăлташ тăрăшса ĕçленипе Услапа йалĕнче (Варнар районĕ) кашни кил хаçат-журнал çырăнса илет. Йала пĕтĕмпе 200 екземпляр хаçат-журнал пырса тăрат.

Пулни-иртнисем

Царев Поликарп Татмăш йалĕнчи (Патăрйел районĕ) паллă хулиган. Вăл хăйĕн ашшĕне, инкĕшне тата ытти килйышĕсене чылайранпа хĕнесе пурăннă. Нумай пулмаст вăл призывниксене Хĕрлĕ Çара ăсатнă чух ĕçсе ӯсĕрĕлсе хăйĕн инкĕшне хĕнесе пĕтерĕ пулнă. Кун çинчен Татмăшри „Восток“ колхоз сумĕнче тухакан стена хаçатĕнче çырнă. Анчах ăна хăйĕн хулиганла ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларни килĕшмен. Çавăнпа та вăл стена хаçат редакторне Улангин Иллене йуна пуçланă. Çак урса кайнă хулиган Царев нойабĕрĕн 19 мĕшĕнче Улангин йулташа сĕçĕпе чиксе амантат.

Халĕ милици органĕсем Царева тытса хупнă. Вăл час суд умне тăрса хăйĕн хулиганла ирсĕр ĕçĕсемшĕн çирĕп ответ тытат.

СПОРТ ХЫПАРĔСЕМ

✪ Нойабĕрĕн 30-мĕшĕнче Шупашкарта каток уçăлат. Декабĕрĕн 11-мĕшĕнче каток çине „Спартак“ обществи карнавал организацилет.

✪ Физкультура хула комитечĕ декабĕрĕн 6-мĕшĕнче „Хĕлтĕр“ станцийĕ уçат. Унта тĕрлĕ спорт инвентарĕсем пулаççĕ.

✪ Физкультура хула комитечĕ сумĕнче республикăри инструкторсен 6 уйăхлăх курсĕ ĕçлет.

Шупашкар хулинчи стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ

Нойабĕрĕн 29 мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, Партпрос çуртĕнче Шупашкар хулинче стена хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулат. Унта стена хаçат редакторĕсене стена хаçатсене суйлав кампани вăхăтĕнче мĕнле ĕçлени çинчен çаран заводĕнчи стена хаçат редакторе Абакумов, Ленинградскайа урам комитечĕ (Стешова), Пединститутри стена хаçат редакторе Алексейев йăлташсем доклад туса параççĕ.

Çав пулĕмрех стена хаçачĕсен выставки пулат. Хулари стена хаçат редакторĕсене суйлав кампани вăхăтĕнче кăларнă стена хаçачĕсене нойабĕрĕн 29-мĕшне 2 сехет тĕлне Партпрос çуртне тăратмала. Çавнашкалах канашлăва редколлеги членĕсен, стена хаçат художникĕсен пымала.

ПСК(б)П хула комитечĕ.
„Красная Чувашия“.
„Чăваш Коммунĕ“.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНĔР.

Суйлав бӯллетенĕ çинчен

Декабĕрĕн 12 мĕшĕнче, хăй йалан пурăнакан йе вăхăтлăха пурăнакан вырăнта, участкăри суйлав комиссийĕн сасăлама уйăрнă çуртне пырса, суйлавçă хăй камне пĕлтерекен документ (паспăрт йе колхоз кĕнеки, йе профсойуз билечĕ, йе çар кĕнеки, йе вăл камне пĕлтерекен урăх удостоверени) кăтартмала. Суйлавçăсен списки тăрăх тĕрĕслени тата суйлавçăсен спискине паллă тунă хыççăн, суйлавçа участкăри суйлав комиссийĕн секретарĕнчен йе комисси членĕнчен бӯллетенсем тата конверт илет.

Пирĕн Чăваш республикинче (ытти автономлă республикăсемпе автономлă облаçĕсенчи тата наци округĕсенчи пекех) кашни суйлавçă икĕ бӯллетен илет.

Пĕри — шурă тĕслĕ, унта Союз Совечĕ депутата суйламалли кандидат хушамачĕ çырнă.

Иккĕмĕшĕ — кăвак тĕслĕ, унта национальносен Совечĕ РСФС Республикинчен Горьки суйлав округĕ тăрăх суйламалли кандидат хушамачĕ çырнă.

Виççĕмĕшĕ — сут-симĕс тĕслĕ, унта национальносен Совечĕ депутата хамăр Чăваш республикинчен суйламалли кандидат йатне çырнă.

Менле кĕрсем-ха вĕсем бӯллетенсем?

Бӯллетен вăл—хут листи (шурă, кăвак, сут-симĕс тĕслĕ), унăн йачĕ: „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли суйлав бӯллетенĕ“. Йачĕ хыççăн: 1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕш, тесе çырнă. Листа икĕ графалă: пĕр графинче — депутата суйламалли кандидат (кандидатсем пĕрре йе темиçе пулма пултараççĕ) хушамачĕсене, йачĕсене тата ашшĕ йачĕсене çырса хунă, тепĕр графинче—депутата суйламалли çак кандидата кам тăратни çинчен çырнă (кандидатсене предприйатисенчи, колхозсенчи, совхозсенчи пĕрлехи пухусем, йе ĕçсыннисен общественнăй пĕрлехи пухăвĕсем палăртнă). Бӯллетен вĕсенче алă пусни: шурă тĕслĕ бӯллетен çинче—Союзра Советне суйламалли округри суйлав комиссийĕн председателĕн, кăвак тĕслĕ (йе сут-симĕс тĕслĕ) бӯллетенсем çинче Национальносен Совечĕне суйламалли округри суйлав комиссийĕн председателĕн.

Çапла ĕнтĕ суйлавçă бӯллетенĕ пĕр ниме те çырмала мар. Унăн бӯллетенĕ хăй хăй кандидатăн сасă парат, çав кандидатăн хушамачĕне хăвармала, ытти хушамачĕсене (кандидатсен иккĕ, виççĕ йе ытларах та пулсан) хуратса хумала. Кашни бӯллетенре хуратмалли пĕр хушамат çеç йулмала, мĕн-ши тесен суйлав саккунĕ тăрăх кашни суйлав округĕнчен пĕр депутат çеç суйламала. Суйлавçă бӯллетенре хуратса хумашкăн икĕ хушамат йе виçĕ хушамат йулсан, вара вăл камшăн сасă панине пĕлме пулмаст, ун пек бӯллетене чăн мар тесе йышăнмаççĕ.

Суйлавçă суйлав бӯллетенне çĕнĕрен хушаматсем çырса хума пултарат-и? Çук, апла тума йурамаст. Суйлав саккунĕ тăрăх, кашни суйлав округĕнче округри суйлав комиссийĕ вăхăтра регистрациленĕ тата вăл суйлав бӯллетенне кĕртнĕ кандидатсене çеç баллотировкăна тăма пултараççĕ. Округри суйлав комиссийĕ общественнăй организацисен тата ĕçсыннисен общественнăй пĕрлехи пухăвĕсем, предприйатисенче — рабочисемпе служащисен, çар часĕсенче—красноармейцсен, колхозсенче—хресченсен, совхозсенче—рабочисемпе служащисен пĕрлехи пухăвĕсем палăртнă кандидатсене регистрацилет. Кунсăр пуçне, палăртнă кандидат çак суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшнĕ пани кирлĕ. Çапла ĕнтĕ, суйлав бӯллетенне çĕнĕрен хушамат çырса хурсан, вăл суйлав саккунĕ хушнипе шайлă пулмаст, çак суйлав округĕнче баллотировкăна тăма пултарăмаст. Çавăн пек бӯллетене чăн мар тесе йышăнмаççĕ.

Суйлав бӯллетенĕсен образецĕсене ССР Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавне ирттерес тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссийĕ çирĕплетнĕ. Суйлавçăн çирĕплетнĕ образецлă бӯллетенсемпе тата çирĕплетнĕ образецлă конвертпа çеç усă курмала. Çакăн пек йĕркене сасăласси чăннипех вăрттăн пултăр тесе тунă. Вăрттăн сасăлама йĕркене кашни конверте суйлав бӯллетенне конвертсăр йама та йурамаст. Конвертсăр бӯллетен—вăл уççăн бӯллетен, а пирĕн Конституци тăрăх сасăласси вăрттăн, урăхла каласан, хупăн пулмала.

Суйлавçă бӯллетенсене тултармалли уйрăм помещенире—кĕрсен,—ку вăл сасăлана чухнехи ответлă вăхăт пулат. Суйлавçăн, çакăнта кăтартнă йăнăшсем ан пулчăр тесе, пит тимлĕ пулас пулат,—ун пек йăнăшсем пулсан, вара суйлав бӯллетенне чăн мар тесе йышăнмаççĕ. Суйлавçă суйлав бӯллетенĕсене йĕркелĕ пулнине пăхса ĕнент те, вĕсене конверта чиксе пичетлесе хурат, вара суйлав йещĕкĕсене тăракан помещение тавăрнса, суйлав комиссийĕ членĕсем умĕнче конверта йещĕке йарат. Суйлавçă хăйĕн ĕçне турĕ, вăл гражданинăн чи аслă тивĕçне пурнăçа кĕртрĕ.

Суйлавçăн саксене пĕлсе тăмала суйлав бӯллетенĕ çинчен. Суйлавçă аллинче суйлав бӯллетенĕ пысăк вăйă. Вăл чăнах пысăк документ. Çак документпа совет çĕршывĕн суйлавçăсем ССР Союзĕн Аслă Советне çĕршывăн чи лайăх çыннисене, тăван çĕршыв чи лайăх ывăлĕсене тата чи лайăх хĕрĕсене, рабочи класс ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн, социализм строительствишĕн пĕтĕм чĕререн тăракан çыннисене суйлаççĕ.

Чуварлейри санаторине квалификацилĕ медсестрасем

тата санатори условийĕсенче физкультура ĕçне пĕлсе тăракан

КУЛЬТРАБОТНИК КИРЛĔ

Ĕçкунне 1935 çулхи мартăн 4-мĕшĕнче йышăннă саккун тăрăх тӯлеççĕ, тата коммунальнăй услуга пулат.

ДИРЕКЦИ.

3—1

Чуварлейри санатори организацисене

санаторине тĕпрен йусанă тата переоборудовани тунă хыççăн кăçалхи çулăн декабĕрĕн 1-мĕшĕнче уçăласси çинчен пĕлтерет

Санаторийĕн хăйĕн електростанци, рентген кабинечĕ тата кумыс мастерскойĕ пур.

ДИРЕКЦИ.

3—1

Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиссийĕ

ПĔЛТЕРНИ

Национальносен Советне Суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АСС Республикинчи Суйлав Комиссийĕн адресĕ çапла:

Шупашкар хули, Чувашский урам, 6-мĕш № çурт (Ĕçтăвкан Тĕп Комитетпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕн çурчĕ).

ТЕЛЕФОНСЕМ:

Председателĕн—6—59, 5—31 тата 5—21.
Секретарĕн—5—24 тата 0—02.
Ответлă исполнителĕн—0—66 тата 0—35.

Лаша çухалнă

Сутă-кăвак, çилхи сылтăм йенелле. Пĕр хăлхин шăнăрĕ хусăк. 15 çулта, çӳлĕш — 147 сантиметр.

Çак адреспе пĕлтермелле: Хĕрлĕ Чутай районĕ, Мишеркасси. Иван Федорович Савельева.

„РОССНАБФИЛЬМ“ Чăваш кантурĕ

кино-театрсенче кăтартма

ÇĔНĔ САСЛĂ ФИЛЬМ

„КАК БУДЕТ ГОЛОСОВАТЬ ИЗБИРАТЕЛЬ“

тăватă копи кăларнă

РЕЖИССЕР—искусствăн тава тивĕçлĕ çынни С. Йуткевич.
КОМПОЗИТОР—Блок.

Çитес кунсенче татах çĕнĕ фильм „Доклад товарища Сталина на Чрезвычайном VIII-м Всесоюзном съезде“ кăларат.

„РОССНАБФИЛЬМ“

2—1

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 892. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.